Сувар

Тутарстан Республикинчи чӑвашсен обществӑпа политика хаҫачӗ

Н.В.Никольский ячӗллӗ премин лауреачӗ (2008),
хаҫата Чӑваш халӑх ӑсхакӑлпа ӳнер академийӗн
Н.В.Никольский ячӗллӗ орденӗпе наградӑланӑ (2013)

42№ (1338), эрнекун, октябрь (юпа) уйӑхӗн 25-мӗшӗ, 2019 ҫул

Сӑнӳкерчӗк gossov.tatarstan.ru сайтран.

АВАЛХИ ПӐЛХАРСЕН ИСТОРИЙӖ – ПИРӖНЕХ

Октябрӗн 18-мӗшӗнче республикӑри нацисен ӗҫне-хӗлне сӳтсе явма Пӑлхара халӑхсен 150 представителӗ тата кашни районӑн администраци пуҫлӑхӗн социаллӑ ыйтусемпе ӗҫлекен ҫумӗсем килсе ҫитрӗҫ. Малтан хӑнасене Музей-заповедника кӑтартма илсе кайрӗҫ. Ҫакӑнта эпир засадӑна лекрӗмӗр те.

Пулса курнӑ ҫынсем унта чӑвашсем ҫинчен нимӗн те асӑнмаҫҫӗ тесе асӑрхаттарнӑччӗ. Ҫакна ӗненес килмерӗ: мӗнле-ха пӑлхарсен историйӗ пирӗнсӗр? Анчах пӗр ушкӑн экскурсоводне пырса итлетӗп, теприне тӑнлатӑп – ҫук. Мордвапа удмурдсене асӑнаҫҫӗ, тӗне кӗрсе чалма сыриччен мӗнле чӗлхепе калаҫнине пӗлтермеҫҫӗ. «Древнетюркский» термин йӑлтах ҫырлахтарать. Васканипе пӗр чарӑнми пакӑлтатакан экскурсоводсене пӳлме те ҫук. Ҫапла 6 хутра та йӑлт тутар историйӗ кӑна.

Ҫакна эпир хусантисем кӑна мар, Аксу, Нурлат, Ҫӗпрел делегачӗсем те асӑрханӑ. Пыра-пыра мӑкӑртатаҫҫӗ тӗрӗсмарлӑхпа килӗшеймесӗр.

Пӗр ӑнланмалла мар япала та пур кунта: Тутарстанрах вырнаҫнӑ Пӳлер (Пӳлер Атӑлҫи Пӑлхарӑн чи шӗкӗр хули пулнӑ) музейӗнче чӑвашсене вырӑна хураҫҫӗ, Пӑлхарта – ҫук. Вӗсем пӗр патшалӑха кӗнӗ-ҫке?

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.)

ҫырӑнтару – 2020

Юратнӑ хаҫатсӑр ан юлӑр!

Хаклӑ вулаканӑмӑрсем! 2020 ҫулӑн пӗрремӗш ҫур ҫулӗ валли хаҫат-журнал ҫырӑнас кампани хӗрсе пынӑ самант халӗ. «Сувар» хаҫата кашни ҫыхӑну уйрӑмӗнчех ҫырӑнса илме май пур. Ҫавӑн пекех Раҫҫей Почтин **https://podpiska.pochta.ru** сайчӗ урлӑ та ҫырӑнма пулать.

«Сувар» хаҫат вӑл – чӑвашла тухса тӑракан республикӑри пӗртен-пӗр кӑларӑм. Вӑл кашни килте, кашни ҫемьере пултӑр! Хаҫата ҫырӑннисем хушшинче каллех квитанцисем тӑрӑх парнесем вылянтарӑпӑр. Васкӑр!

«Сувар» хаҫат индексӗ Тутарстанра П2340, Раҫҫейӗн ытти регионӗсенче П7093.

кӗскен

Тутарстан Президенчӗ Рустам Минниханов октябрӗн 24-мӗшӗнче ТР Правительство Ҫуртӗнче «Татнефть» компанин директорсен канашӗпе, ун хыҫҫӑн пӗчӗк нефть компанийӗсен ертӳҫисемпе, «Татнефтехиминвест-холдинг» директорӗсен канашӗпе темиҫе лару ирттерчӗ. Ӗҫ кунӗн иккӗмӗш ҫуррине «Манӑн бизнес» форума хутшӑнчӗ, пӗлтерет республика ертӳҫин пресс-службы. Форум анлӑ форматпа иртрӗ, унта 9 пине яхӑн предприниматель хутшӑнчӗ. Спикерсем те Раҫҫейӗпе паллӑ ҫынсем. Бизнес темине анлӑрах уҫса парас тӗллевпе йӗркелӳҫӗсем тӗрлӗ енлӗ ӗҫ ҫыннисене чӗннӗ. Чи паллисем хушшинче Ляйсан Утяшева, Радислав Гандапас.

Лайӑш районӗнче ку эрнере Тутарстанри чи лайӑх Культура ҫурчӗсене суйларӗҫ. Конкурса республикӑри 34 клуб хутшӑннине пӗлтерет «Камская новь» хаҫат. Жюри председателӗ ТР культура министрӗн ҫумӗ Ленар Хакимзянов пулчӗ, вӑлах мероприятие уҫакан̆ӗ те. Муниципаллӑ тата зона шайӗнче ҫӗнтернисем Лайӑшри Культура ҫурчӗн холӗнче декоративлӑ прикладной искусство япалисен куравне хатӗрленӗ. Ун хыҫҫӑн клуб ертӳҫисем хӑйсен ӗҫӗн кӗске отчетне туса панӑ, юлашкинчен творчествӑлла номер кӑтартнӑ. Ҫӗнтерӳҫӗсем октябрӗн 28-мӗшӗнче паллӑ пулаҫҫӗ. Чи лайӑххисене кирлӗ хатӗр е музыка инструменчӗсем туянма, сцена костюмӗсем ҫӗлеме укҫан сертификат парнелеме палӑртнӑ.

Тутарстанра, Чӑваш Енре, Оренбургпа Ульяновск облаҫӗсенче улталаннӑ пайҫӑсен проблемисене татса парасси тата вӑраха кайнӑ строительствӑсем чакнин динамики лайӑхланнӑ. Кун пирки РФ Президенчӗн Федерацин Атӑлҫири полномочилле председателӗн ҫумӗ Алексей Кузьмицкий Чулхула облаҫӗнче РФ вице-премьерӗпе Виталий Муткопа тӗл пулсан пӗлтернӗ. Ун сӑмахӗсемпе, округа кӗрекен 8 регионта улталаннӑ пайҫӑсен прависене хӳтӗлессипе регионри фондсем активлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Тутарстанра проблемӑсене татса панисӗр пуҫне малашне кун пекки ан пултӑр тесе ҫирӗп мерӑсем йышӑннӑ. 2019 ҫул пуҫланнӑранпа республикӑра пай хутшӑнӑвӗллӗ 630 килӗшӗве регистрациленӗ. Вӗсене эскроу-счетпа усӑ курса йӗркеленӗ. Ҫак механизма пула застройщиксем ҫуртне туса пӗтернӗ хыҫҫӑн тин пайҫӑсенчен укҫа илеҫҫӗ.

«СУВАР» ХАҪАТА ШУПАШКАРТА ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖН ҪУРТӖНЧЕ ТУЯНМА ПУЛАТЬ

ЧИ ҪАМРӐК лидер 11 ҫулта. 2 стр.

ИНСТИТУТ 50 тултарчӗ. 3 стр.

ТЕПӖР 3 промпарк пулать. 4 стр.

АВАЛХИ ПĂЛХАРСЕН ИСТОРИЙĔ – ПИРĔНЕХ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Çав вăхăтра пирĕнпе пĕрле экскурсие пынă Тутарстанри Истори институтĕнче ĕçлекен профессор эпĕ чăркăшнине кура, пырса çапла каларĕ: «Авалхи масар чулĕсенчен ытларахăшĕ чăвашла вуланаççĕ, тутар чĕлхи Ылтăн Урта вăхăтĕнче кăна патшалăх чĕлхине çаврăна пуçланă. Вăл уйгур чĕлхине казах чĕлхинчен те çывăхрах». Тӳрĕ кăмăллă наука çынни чăнлăх майлă, нацин пайти майлă мар.

Çак шухăша тĕрĕсе хурсан тутар чĕлхи ăçтан тата хăçан ку тăрăха килни пирки те çирĕплетме пулать – 1236 çулта монголсемпе пĕрле. Çакна ĕненес пулсан 992 çулта чăвашла калаçакан Пăлхар çыннисем ислам йышăннă пулса тухать.

Улатимĕр кнеç тыткăна илнĕ атă тăхăннă пăлхарсем те пирĕнлех пупленĕ. Мĕншĕн тесен ку шухăшра логика пур. «Хăмла шывра путсан пирĕн туслăх таталĕ», – тесе çырнă пăлхарсем вырăссемпе çирĕплетме мирлĕ килĕшӳре. Хăйсене пăлхар несĕлĕсем текен пирĕнпе кӳршĕлле пурăнакан халăх çыннисенчен ытларахăшĕ хăмлапа мĕн тумаллине пĕлни пирки халĕ те иккĕленӳсем пур.

Хальхи технологисене тĕпе хурса тунă чаплă музейра тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăх авалхи Пăлхар пасарĕнчи пек хĕвĕшет: эрменсем те пур кунта, арабсем те, монголсен кӳршисем бурятсем те куçĕсене хĕсе-хĕсе пăлхарсен ылтăн эрешĕсен дубликачĕсене ăмсанса тимлеççĕ. Археологсем çĕр айĕнчен чавса кăларнă ылтăн çĕрĕсем, кĕмĕл тенкĕсем, пăхăр сулăсем музей çуттисем çинче ялтăртатса тăрса пуян аваллăха аса илтереççĕ пире. Пĕлекенни – пĕлет, пĕлменни юптаруçă-экскурсовод мĕн каланине ĕненет. Тĕрĕсмарлăхпа çырлахас килмест те, анчах историе хăçан та çĕнтерекен çырать.

Тепĕр енчен, Чăваш Республики чăвашсен Тутарстан, Самар, Чĕмпĕр тăрăхĕсенчи историйĕ тĕлĕшĕпе йăшăлтатманнипе те пулса иртет çакă. Политика çапла ĕнтĕ вăл, пурне те чаплă, паттăрла аваллăх кирлĕ, тĕрĕслĕх айккинче тăтăр.

Начаркка хурăнташ пуян тăванĕсен ĕçкинче вырăн тупайман пекех, пăлхарсен чăн историйĕ пĕр тымарлă икĕ халăх пуçлăхĕсене юраса пĕтеймест. Пурте вăтанаççĕ чăнлăхран: чăвашсем мăсăльмана тухса авалхи ятне, вырăнне çухатнишĕн именеççĕ, тутарсем хăйсен чăваш несĕлĕсенчен вăтанаççĕ, вĕсен тăванлăхне йышăнасшăнах мар. Тĕрĕслĕхшĕн каласа хăвармалла, Рустам Минниханов кăçал Аксури Уявра чăваш кĕпи тăхăнса картана тăчĕ, турткаланса тăмарĕ.

Анчах та Пăлхар историне йышăнмасăр чăваш истори науки Н.Никольский, И.Юркин, В.Дмитриев тата ыттисен тĕпчевĕсене айккине ывăтса ярать. Мĕншĕн вĕсем ура çинче (чăвашсем – пăлхарсен тăхăмĕсем пулни çинче) çирĕп тăмаççĕ? Çакă пуринчен ытларах тĕлĕнтерет. Пуян чăвашсем пăлхар версине айккине сирсе сăвар теорине мала хума тытăнчĕç. Вĕсене кăштах тӳрлетес килет.

Ĕлĕк ялсем крепоç-хула йĕри-тавра пулнă (çакă хальхи вăхăтра темиçе чăваш ялĕ пĕр-пĕрне çывăх вырнаçнине ăнлантарать), ку вĕсене хӳтлĕхе хăвăрт çитсе алăка питĕрсе илме май панă. Пăлхар, Пӳлер, Сăвар пекех чаплă Меречен, Элшел (Ошель), Чӳктăвĕ (Джукетау) тата ытти те – пурĕ патшалăхĕпе 40 яхăн пысăк (хальхилле каласан) хула округĕ пулнă. Вĕсенче турхансем хуçаланнă. Ун чухнехи (такăр çулсем пулман вăхăтри) пурнăç системи çавнашкал компактлă условисенче пурăнтарнă çынсене. Хальхи чăваш историкĕсем хыççăн каяс пулсан, элшелсем те, мереченсем те, ыттисем те уйрăм халăх никĕсĕнче тăма пултарнă. Мĕншĕн вĕсене мала хурас мар? Летопиçсенче сахал çырнипе кăна-и?

Химикатсемпе шуратнă çăнăхран пĕçернĕ çăкăр, пальма çăвĕнчен тунă услам çу, удобрениллĕ шыв çинче ӳстернĕ хăяр çинĕ вăхăтра эпир ултавлă историе те «çăтса» яратпăр тесе шутлаççĕ-ши? Кунпа килĕшме çук. Çĕнтерӳпе мар, арканупа вĕçленнĕ пулсан та авалхи пăлхарсен историйĕ – пирĕнех.

Анчах историпе ун пек выляни вăл чи малтан ӳсекен ăрушăн сиенлĕ.

Хатĕррипе усă курмалла

– Эсир «Сабантуй ирттертĕмĕр, Уяв ирттертĕмĕр» тесе мухтавлă докладсем ан тăвăр. Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пур, – терĕ Фарид Мухаметшин ТР Халăхсен ассамблейин ларăвĕнче тухса сăмах калакансене итленĕ хыççăн.

Чăнах та, Спас тата Заинск районĕсен представителĕсем ĕлĕкхи пек паллаштарчĕç хăйсен ĕçĕсемпе. Статистикăри пек: кăна ирттернĕ, ăна ирттернĕ, кунта ун чухлĕ, лере çавăн чухлĕ...

Республикăри Туслăх Çурчĕн директорĕ Ирек Шарипов доклачĕ çеç пухăннисене шухăша ячĕ. Çак енĕпе миçе çул ĕçлетпĕр пулсан та, Халăхсен ассамблейин представительствисем пур районта та çук. Туслăх Çурчĕсене те пур çĕрте те тăваймаççĕ. Проект хатĕрлеме, çуртне тума районăн укçа çитмест. Çав вăхăтра патшалăх пулăшăвĕсĕр те мар. Туслăх Çурчĕсене микроавтобуссем параççĕ, регистраци иртнĕ пулсан, вĕсем грантсем илме пултараççĕ. Ассамблейăн представительствисем патшалăх наци политикине пурнăçа кĕртмелле. Çакна шута илмен район пуçлăхĕсем тĕрĕс тумаççĕ.

Хальхи вăхăтра республика программисемпе нумай клуб, ресурс центрĕсем тăваççĕ. Ассамблейăн çав «ут» çине хăпарса ларма та пулать. Телее, Культура министерствин представителĕ те çак шухăша сĕнчĕ. Проектсем шыриччен, хатĕррипе усă курмалла.

Фарид Мухаметшин ассамблея пайташĕсене сентябрьти суйлава хастар хутшăннăшăн, халăх хушшинче ăнлантару ĕçĕ илсе пынăшăн тав турĕ.

Пăлхарти Туслăх Çуртĕнче Валерьян Киргизин картинисен куравне йĕркеленĕччĕ. Яшпашелĕнчи чăваш ансамблĕ те ташласа кăтартрĕ. Çыннисем нумай пулмасан та пирĕннисем хастар ĕçлеççĕ. Ахальтен мар Пăлхарти чăваш центрĕн ертӳçине Валентина Якличевăна ТР Халăхсен ассамблейин Хисеп хутне парса чысларĕ Фарид Мухаметшин.

Константин МАЛЫШЕВ.
Сăнӳкерчĕксем авторăн тата gossov.tatarstan.ru сайтран.

«çулталăк лидерĕ – 2019»

ВĔСЕМ РЕСПУБЛИКĂН МАЛАШЛĂХĔ

Тутарстанăн çамрăксен политикине Раççейре кăна мар, Европăра та тĕслĕхлисен шутне кĕртеççĕ. Кун çинчен ТР Патшалăх Канашĕн Çамрăксен парламенчĕн ертӳçи Нина Шимина октябрĕн 23-мĕшĕнче Хусанта ачасен тата çамрăксен обществăлла пĕрлешĕвĕсен лидерĕсемпе ертӳçисен конкурсĕн çĕнтерӳçисене чыслас церемонире каларĕ. Ку енĕпе чăнах та Тутарстан мухтанма пултарать, çамрăксемпе çанă тавăрсах ĕçлеççĕ кунта. Тĕрĕсрех каласан, аталанма патшалăх шайĕнче майсем туса пареççĕ. «XXI ĕмĕрĕн çулталăк лидерĕ» Пĕтĕм Раççей конкурсĕн республикăри тапхăрĕ те акă 17-мĕш хут иртрĕ. Çулран çул вăл анлăланса кăна пырать. Кăçал республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи çамрăксемпе ача-пăча пĕрлешĕвĕсен 500 яхăн лидерĕпе ертӳçи хутшăнчĕ унта, 250-шĕ куçăн мар тапхăртан иртсе финала тухрĕ. Асăнса хăварар, ăна ТР Çамрăксен ĕçĕсен министерстви пулăшнипе Республикăн ачасемпе çамрăксен канашĕ йĕркелет. Тĕллевĕ – асăннă пĕрлешӳсен лидерĕсемпе ертӳçисене тĕрев парасси, çамрăксен политикин сферинчи пултаруллă кадрсене тупса палăртасси. Урăхла каласан, республикăн малашлăхне тăвакан чи пултаруллă çамрăксене асăрхасси.

Конкурсантсем проектсем хатĕрлесе хӳтĕлемеллеччĕ. Куçăн тапхăрĕ Хусанта октябрĕн 21-23-мĕшĕсенче иртрĕ. Конкурсантсем çав кунсенче сахал мар тĕрĕслев витĕр тухрĕç. Вĕсен тĕрлĕ конкурссемпе ăстăн тата ĕçлĕ вăйăсене хутшăнса хăйсене тĕрлĕ енчен, çав шутра командăпа ĕçлемелли хăнăхăва та, кăтартмаллаччĕ. Палăртса хăварар, иккĕмĕш тапхăра Атăл ку енчи зонăран пĕртен-пĕр чăваш, Çĕпрел районĕнчи Аслă Аксу шкулĕнче вĕренекен Мария Храмова тухрĕ. Шел, кăшт кăна ăнмарĕ ентешĕмĕре, çĕнтерӳçĕсен йышне кĕреймерĕ. Апла пулин те маттур, кунта пурте хутшăнаймаççĕ.

Конкурсантсен пултарулăхне яланхи пекех 9 номинаципе хакларĕç. 30 ытла конкурсант çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕ. Анат Камăри 11 çулти Артем Ярославлев вĕсен йышĕнче чи çамрăкки пулчĕ. Вăл 11-13 çулсен хушшинче çĕнтерчĕ. Кам çĕнтерни церемонире кăна паллă пулнăран çĕнтерӳçĕсен савăнăçне çырса кăтартма сăмах та çитмест. Залра вăйлă эмоци хуçаланчĕ çав самантсенче. Çĕнтерӳçĕ-лидерсене, ертӳçĕсене кĕрлесе йышăнчĕ куракан. Сăмах май, чи вăйлă лидерсем хальхинче Çырчаллинченччĕ, шăпах вĕсем тăтăшрах сцена çине хăпарчĕç те. Нумайăшĕшĕн конкурс кăçала вĕçленчĕ пулсан, тĕрлĕ номинацире «Çулталăк лидерĕ» ята тивĕçнисемшĕн умра тепĕр тĕрĕслев. Вĕсем пурте çитес вăхăтра Мускава каяççĕ, «XXI ĕмĕрĕн çулталăк лидерĕ» Пĕтĕм Раççей конкурсĕнче Тутарстан чысне хӳтĕлеççĕ.

Ирина КУЗЬМИНА.

Октябрӗн 16-18-мӗшӗсенче Тутарстан тӗп хулинче Хусанти патшалӑх культура институчӗ 50 ҫул тултарнине халалланӑ Культурӑпа тата вӗрентӳпе халӑхсен хушшинчи анлӑ саммит иртрӗ. Мероприятин программи питӗ анлӑччӗ. Наукӑпа практика конференцийӗсем кӑна темиҫе: «Хальхи арт-уҫлӑх: ертӳҫӗ концепцисемпе вырӑнти художествӑлла практикӑсем», «Глобализаци условийӗсенче хальхи социаллӑ культура сферин аталанӑвӗн доминанчӗсем», «Библиотека 4.0: мисси, стратеги, практика». Унсӑр пуҫне тӗрлӗ дискуссисем: «Туризм: теорипе практика», «Театр вӗрентӗвӗ: проблемӑсемпе перспективӑсем», «Регионсенчи кинопа телекуравӑн пуласлӑхӗ. Специалистсен шухӑшӗ», «Теле- тата киноиндустри валли специалистсене хатӗрлессин проблемисем», «Вӗрентӗве цифрӑлассин условийӗсенче хальхи музыка культурин аталанӑвӗ» тата ытти те. Творчество сферинче ӗҫлекенсем валли этнофутуризмпа, перформанспа, хеппенингпа ятарлӑ площадкӑсем ӗҫлерӗҫ.

ЮБИЛЕЕ САММИТ ПУҪТАРСА ПАЛӐРТРӖҪ

Саммит питӗ те ҫӳллӗ шайра иртрӗ. Унта РФ культура министрӗн ҫумӗ Николай Овсиенко, ТР Премьер-министрӗн ҫумӗ Лейла Фазлеева, ТР Патшалӑх Канашӗн Председателӗн ҫумӗ Татьяна Ларионова, ТР культура министрӗ Ирада Аюпова, Марий Эл Республикин культура, пичет тата национальноҫсен ӗҫӗсен министрӗ Константин Иванов, Чӑваш Республикин культура,национальноҫсен тата архив ӗҫӗсен министрӗн ҫумӗ Елена Чернова, Удмурт Республикин министрӗ Владимир Соловьев, Ульяновск облаҫӗн искусствӑпа культура политикин министрӗн ҫумӗ Марина Михеева, Пушкӑртстан Республикин Культура министерствин Республикӑри вӗрентӳпе методика центрӗн директорӗ Лариса Марешова хутшӑнчӗҫ. Наукӑпа культура тата искусство ӗҫченӗсем хушшинче Федерацин Атӑлҫи округӗн, Мускавпа Санкт-Петербург хулисен, Финлянди, Азербайджан, Турци, Эстони, Узбекистан, Венгри, Франци, Перу, Казахстан представителӗсем пулчӗҫ.

Пӗрремӗш ӗҫ кунӗ пленарлӑ ларуран пуҫланчӗ. Ҫавӑнта палӑртрӗҫ культура сферинчи тӗп проблемӑсемпе ыйтусене. Власть органӗсен представителӗсем саламлӑ сӑмахпа тухнӑ хыҫҫӑн тӗп темӑсемпе докладсем вуларӗҫ. Хельсинкирен (Финлянди) килнӗ искусствовед Андрес Крюгера итлеме интереслӗ пулчӗ. Искусство хальхи пурнӑҫӑн пичӗ пулмалли докладӑн тӗп шӑнӑрӗ пулчӗ. Ун шучӗпе, шел пулин те, искусствӑна халӑх патне ҫитерес тесен нумай чухне унӑн ирӗклӗхӗшӗн кӗрешме тивет.

Раҫҫей Федерацийӗн искусствӑсен тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, РФ Правительствин культура облаҫӗнчи премийӗн лауреачӗ Михаил Фишман-Борисов хальхи театрсен ӗҫне хак парса Вахтангов шкулне упраса хӑварасси ҫинчен калаҫрӗ. Мускаври патшалӑх культура институчӗн халӑх художествӑлла культурин кафедра профессорӗ, педагогика наукисен докторӗ Елена Стрельцовӑн шучӗпе, пурнӑҫран юлас мар тесен аслӑ шкулсен вӗрентӳ процесне ҫӗнӗ стандартсем кӗртмеллех. Францин Раҫҫейри посольствин представителӗ, «Альянс Францез-Казань» эксперчӗ Элиза Сеспедес Францин хальхи культура аталанӑвӗпе паллаштарчӗ.

Тытӑмлӑ, пӗлтерӗшлӗ, усӑллӑ пулчӗҫ программӑна кӗнӗ мероприятисем. Саммитӑн культурӑпа вӗрентӳ программи те интереслӗ иртрӗ. Хӑнасене Атӑлҫи халӑхӗсен культурипе, йӑли-йӗркисемпе паллашма интереслӗ пулни палӑрчӗ. Унсӑр пуҫне кино кӑтартӑвӗсемпе мастер-классем, Тутарстан, Пушкӑртстан, Чӑваш Ен, Марий Эл, Мордва, Удмурти республикисен патшалӑх ансамблӗсен концерчӗсене курма пулчӗ.

Саммит хупӑннӑ кун иртнӗ ларура регионсенчи культура министрӗсем тухса калаҫрӗҫ, кашнин хӑйӗн тема пулчӗ. Пӗтӗмлетсе каласан, вӗсен доклачӗсем тӑрӑх Атӑлҫири культура аталанӑвӗ усӑмлӑн курӑнчӗ. Юлашкинчен тӗрлӗ дискуссисенче, наукӑпа практика конференцийӗсенче, ҫамрӑксен батлӗнче лартнӑ ыйтусем тӑрӑх Раҫҫейри культура аталанӑвӗн резолюцине йышӑнчӗҫ.

РФ культура министрӗн ҫумӗ Николай Овсиенко: «Ача-пӑча искусство шкулӗсене регион шайне кӑлармалла»

«Саммит культура отраслӗн ертӳҫисемпе ӗҫченӗсемшӗн питӗ те усӑллӑ площадка пулса тӑчӗ. Йышӑннӑ резолюцие пӗрлехи тӗллевсен декларацийӗ тесе палӑртсан тӗрӗсрех. Вӑл малалли ӗҫсен ҫулӗ. Нумай регионӑн культура министрӗсене итлерӗмӗр. Ӗҫ уйрӑмлӑхӗ пур, паллах, анчах проблемӑсем пӗрешкел. Кадрсен ҫитменлӗхӗ пур ҫӗрте те. Пурне те культура сферинчи вӗрентӗве ҫамрӑксемшӗн интереслӗ тӑвасси, вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн студентсене тӑван региона таврӑнасси, ача-пӑча искусство шкулӗсен преподавателӗсен ӗҫ укҫин шайӗ палӑртнӑ требованисене тивӗҫтерменни хумхантарать. Ӗҫ укҫипе ҫӑмӑл мар лару-тӑру, искусствӑсен ача-пӑча шкулӗсем ҫӗршывӗпе илсен, йышлӑ. Кун валли питӗ нумай укҫа кирлӗ. Анчах проблемӑна татса памаллах. Мӗншӗн тесен пуҫламӑш шкул вӑтам тата аслӑ шкулсен никӗсӗ пулса тӑрать. ЧР культура министрӗн ҫумӗ тухса калаҫнӑ хыҫҫӑн ахальтен мар эпӗ ҫак ыйтӑва хускатрӑм. Унта ача-пӑча шкулӗсем пурте муниципаллӑ шайра. Ман шутпа вӗсен статусне ҫӗклемелле, ҫавӑнпа искусство шкулӗсене регион шайне кӑларма сӗнетпӗр. Пӗрремӗш утӑм кун валли тунӑ.

Саммит Хусанта иртни символлӑ. Тухса калаҫакансем пурте кӑштах та пулин тутар пулма тӑрӑшрӗҫ ҫав кун. Килӗшет-и ку сире е ҫук, анчах та Хусан Атӑлҫин ҫирӗплетмен тӗп хули пулса тӑрать. Нацисен хушшинчи килӗшӳлӗхпе ҫыхӑннӑ компетенцисем те кунта чӑмӑртаннӑ. Тата Хусанти патшалӑх культура институчӗ те Атӑлҫире чи пысӑкки. Саммит ҫулсерен иртекен мероприяти пулса тӑрсан аван. РФ Культура министерстви ку пуҫарӑва ырлать».

ТР культура министрӗ Ирада Аюпова: «Кӳршӗсенчен вӗренмелли нумай»

«Марисен опытне илер. Пирӗн те ҫамрӑксен оркестрӗ, ача-пӑча коллек-

Кашни регионӑн хӑйӗн вӑйлӑ енӗ пур. Чӑваш Ене илсен, пуринчен ытла вӗсем халӑх промыслипе мӗнле ӗҫлени килӗшет. Музей ӗҫӗ те, эпос та вӗсен пуян, интереслӗ. Наци йӑли-йӗркисене упраса хӑварассипе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенчен фольклор енӗпе вӗренмелли, тӗслӗхе илмелли нумай.

тивӗсем пур. Анчах вӗсем ансамбльсене юридици формине парас ӗҫе ҫӑмӑллатма пултарнӑ. Ман шутпа, хамӑр ӗҫре тӗп вырӑна ачасене хумалла. Унтан – нацисен культурисене. Юлашки вунӑ-вун пилӗк ҫулта халӑх культурине ҫӗнӗлле йышӑнма пуҫланине куратпӑр, ку аван. Пирӗн вӑй – наци колоритӗнче, тӗрлӗлӗхре. Кашни регионӑн хӑйӗн вӑйлӑ енӗ пур. Чӑваш Ене илсен, пуринчен ытла вӗсем халӑх промыслипе мӗнле ӗҫлени килӗшет. Музей ӗҫӗ те, эпос та вӗсен пуян, интереслӗ. Наци йӑли-йӗркисене упраса хӑварассипе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенчен фольклор енӗпе вӗренмелли, тӗслӗхе илмелли нумай. Удмуртин этнографи комплексӗсем тӑвассипе паха опыт пур. Пӗлетӗр-и, этем тӑвакан чи пысӑк йӑнӑш вӑл – карьерӑра е творчествӑра чи ҫӳллӗ картлашкана ҫитнӗ хыҫҫӑн мӑнкӑмӑлланса ыттисем ҫине ҫӳлтен пӑхни, аталанма пӑрахса лӑпланни. Хуть хӑҫан та ыттисенчен вӗренмелли юлатех».

ЧР культура, национальноҫсен тата архив ӗҫӗсен министрӗн ҫумӗ Елена Чернова: «Тӑван региона таврӑрасчӗ»

«Саммита Чӑваш Ен активлӑ хутшӑнчӗ. Пӗрремӗш кунран пуҫласа ЧПУ ректорӗ кунта. 600 ачаран тӑракан хор, халӑх музыкин ача-пӑча оркестрне йӗркелени, ӑна бюджет программине кӗртни ҫав тери паха. Пирӗншӗн ку опыт тӗслӗхлӗ. Удмуртире Мускаври е ытти пысӑк хуласенчи культура институчӗсенче вӗренсе тухсан та ҫамрӑксем тӑван регионна таврӑнни тӗлӗнтерчӗ. Вӗсем ҫамрӑксене пурӑнмалли условисемпе тивӗҫтерсе илӗртеҫҫӗ. Ку проблема кашни регионтах пур, кадрсем таврӑнмаҫҫӗ. Ачасем пысӑкрах вырӑна тивӗҫни те савӑнтарать, паллах. Пирӗн республикӑри инфраструктура аталанӑвӗ, шел пулин те, тӗп хуласеннипе танлашаймасть. Сурт-йӗр проблеми, ӗҫ укҫин пӗчӗк шайӗ ҫамрӑк специалистсене мегаполиссене хӑвалать. Ку енӗпе апла сахалрах ӗҫлетпӗр. Ҫитес ҫул пирӗншӗн питӗ пӗлтерӗшлӗ. ЧАССР 100 ҫул тултарнине палӑртатпӑр. Мероприятисен циклне йӗркеленӗ, интереслӗ идейӑсем, проектсем нумай. Чи кирли федераллӑ пулӑшу пур, вӑл ҫителӗклӗ».

Ирина ТРИФОНОВА.
Автор сӑнӳкерчӗкӗсем.

юбилей

СĂМАХА ЯЧĔШĔН КАЛАМАСТЬ

Кĕр мăнтăрĕпе пуян октябрь уйăхĕ Элмет районĕнчи Лидия Савельевна Лисинашăн кăçал тата пĕлтерĕшлĕрех – 75 çул тултарать. Халăх çутĕçĕн отличникĕ, Республикăн тава тивĕçлĕ учителĕ, ялăн хисеплĕ çынни 50 çула яхăн шкулта ачасене вĕрентрĕ, хăй вăхăтĕнче шкул директорĕн вĕрентӳ енĕпе çумĕ, директор та пулчĕ.

Хăй вăл çак енчисемех, Пӳсрек ялĕнче çуралнă, 4 класс пĕтерсен малалла кӳршĕллĕ Патраклă шкулне каять. Çул нуши пысăк пулнă вăл вăхăтра, шкула ачасен çуран, хăш вăхăтра лашапа çӳреме тивнĕ. Апла пулин те шкула каймасăр пĕр кун та юлман. Алла аттестат илсен Лидия Елабугăри культурăпа çутĕç училищине вĕренме кĕрет. Тепĕр икĕ çултан яла библиотекарь пулса таврăнать.

Аслă пĕлӳ илес ĕмĕтне татмасть вăл. Ĕçленĕ хушăрах Ульяновск хулинчи педагогика институтĕнче кусăн мар майпа вĕренет. Учитель ĕç çулне Елховой ялĕнче пуçлать. Каярах Пӳсрек, Патраклă шкулĕсенче ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет.

Пĕрле вĕреннĕ Валерий Тимофеевич Лисинпа 1967 çулта пĕрлешсе çемье çавăрать. Машăрĕпе 3 ача çуратса ӳстереççĕ. Кунта палăртса хăвармалла, Лидия Савельевна ачисем пĕчĕк чухне те обществăлла ĕçе юратса илсе пырать. Ĕç картлашкипе çӳлерен çӳле хăпарать. Çапла 1971–1984 çулсенче шкул директорĕн вĕрентӳ енĕпе çумĕ, унтан директор пулать. Явапллă ĕçе пăхмасăр ялти фольклора пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарать. Ачасемпе пĕрле вырăнти йăла-йĕркесем çинчен альбомсем хатĕрлет, тĕлпулу касçĕсем йĕркелет. 2000 çулта этнокультура темипе республика конференцине те ирттерчĕ. Унта ТР вĕрентӳпе наукăн вăл вăхăтри министрĕ Х.Харисов, Шупашкартан ЧР вĕрентӳ министрĕн çумĕ В.Сапожников, Пушкăртстанран, республикăри тĕрлĕ районтан шкул директорĕсем килнĕччĕ. Пурте шкул мĕнле чаплă пулнине мухтаса калаçрĕç. Шкул директорĕн йывăр лавне туртнă чух та вăл вĕрентекен ачасем олимпиадăсенче тăтăшах малти вырăнсене йышăнатчĕç.

Ялта çĕнĕ шкул, ача сачĕ, медпункт, çул тутарас ĕмĕтпе ăста кăна çитмерĕ пуль вăл. Сăмаха ячĕшĕн кăна каламастчĕ, ĕçе вĕçне çитермесĕр лăпланмастчĕ.

Тивĕçлĕ канăва тухсан та ялшăн нумай тăрăшрĕ хисеплĕ вĕрентекенĕмĕр. Вăй çитнĕ таран тăван шкула та пулăшма тăрăшрĕ.

Лидия Савельевна хальхи вăхăтра та пушă лармасть. Ялти Ветерансен канашĕн председателĕ вăл. Ваттисен шухăш-кăмăлне, тертне-нушине – йăлтах тимлĕхре тытать. Çĕнтерӳ кунĕсенче пĕрне те манса ан хăварччăр тесе тăрăшать.

Хисеплĕ вĕрентекенĕмĕре юбилей ячĕпе чĕререн саламласа çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, малашне те вăшăват çӳреме вăй-хăват сунатпăр. Ĕмĕтӳсем пурнăçлансах пычччăр, çывăх çыннăрсен ăшшине туйса нумай çул пурăнмалла пултăр.

Вĕренекенĕсем.
Редакци архивĕнчи сăнӳкерчĕк.

министрсен кабинетĕнче

РЕСПУБЛИКĂРА ВИÇĔ ÇĔНĔ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПАРКĔ УÇĂЛМАЛЛА

Тутарстан Республикинче паяна пурĕ 570,3 пин предпринимательпе харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекене шута илнĕ. «Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство тата предпринимательсен пуçарăвĕсене тĕрев парасси» наци проектне пурнăçланин кăтартăвĕ республикăра 678 пин çынпа танлашмалла. Кун пирки ТР Министрсен Кабинетĕнче иртнĕ брифингра ТР экономика министрĕ Фарид Абдулганиев пĕлтерчĕ.

Палăртнă кăтартăва пурнăçлас тĕллевпе Тутарстанра ку çулта регион шайĕнчи пилĕк проекта хута янă: пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăн субъекчĕсене льготăллă финанс пулăшăвне парасси; тĕрлĕ методикăсемпе усă курса пĕчĕк тата вăтам бизнеса кĕске вăхăтра пысăк ӳсĕм тума пулăшасси (сăмах акселераци пирки пырать); ĕç условийĕсене лайăхлатасси, фермерсене тата ял хуçалăх кооперацийĕсене аталанма пулăшу системине йĕркелесси; предпринимательствăна халăхра сарасси.

Фарид Абдулганиев сăмахĕсемпе, ку ĕçре чи кирли предпринимательсене информаци енĕпе консультацисем пани. «Час-часах пирĕн пата предприниматель килсен хăйне мĕн кирлине татăклăн калаймасть, тĕрлĕ енне сапаланса каять, нумай чухне пĕлӳ çитменнипе. Çавăнпа кирлĕ информаципе тивĕçтересси тĕп вырăнта», – терĕ министр. «Манăн бизнес» центрта юлашки 9 уйăхра пурĕ 13,5 пин консультаци панă. Вĕрентӳрен пуçласа продукцие рынокра ăнăçлă сутасси таран. Унсăр пуçне 3000 пине яхăн бизнесмен «Тĕрĕсленĕ бизнес» портал урлă контрольпа надзор органĕсемпе çыхăнса ĕçлеме вĕреннĕ.

Паллах, предпринимательсене пуринчен ытла патшалăхран мĕнле пулăшу илме пултарни интереслентерет. Экономика министрĕ шантарнă тăрăх, çĕршывра вăл çителĕклĕ. Усă курма кăна пĕлмелле. Чи йышлă ыйтусем финанс пулăшăвĕпе, микрозаймсемпе тата субсидисемпе çыхăннă. Çулталăк пуçламăшĕнчен тытăнса республикăра 605,1 миллион тенкĕлĕх 263 микрозайм, 1,1 миллиард тенкĕлĕх 178 поручительство панă. Республикăн 9 проекчĕ валли кирлĕ хатĕрсем туянма 45,2 миллион тенкĕ уйăрнă.

Октябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна пулăшас тĕллевпе тепĕр проект программи хута кайнă. Вăл – кредитăн процент ставкине субсидилесси. Майпа усă курас текенсен Экономика министерствин пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна пулăшассипе тата аталантарассипе ĕçлекен ятарлă центрне заявка памалла. Центр

Республикăра харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенсемпе те нумай ĕçлеççĕ. Нацпроектпа килĕшӳллĕн, вĕсене ĕçлеме ырă условисем туса памалла. Ку вăхăта республикăра вĕсем 37 пин çын ытла.

çулталăкне пĕр субъект пуçне 10 миллион тенкĕ таран тăкаксене хуплама пултарать. Программăн 2019 çула йышăннă бюджечĕ 130 миллион тенкĕпе танлашать. Паяна пурĕ 60 заявка пуçтараннă.

Ку çулта ют çĕршыв рынокĕсемпе ĕçлекен 362 предпринимателе пулăшнă. Çапла 64 çĕнĕ компани экспорта тухма пултарнă. Çырнă контрактсем 13,8 миллион долларпа танлашнă.

Фарид Абдулганиев сăмахĕсемпе, республикăра харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенсемпе те нумай ĕçлеççĕ. Нацпроектпа килĕшӳллĕн, вĕсене ĕçлеме ырă условисем туса памалла. Ку вăхăта республикăра вĕсем 37 пин çын ытла. Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенсен шучĕ кунсерен тенĕ пек ӳссе пырать. 9 уйăх хушшинче çак бизнесменсенчен 51 миллион тенкĕ налог пуçтараннă.

Бизнесменсен тепĕр пуç ыратăвĕ – ĕç вырăнне йĕркелесси. Аренда хаклă, уйрăмах пысăк хуласенче. Нумайăшне çак çĕклем йăтайми пуласси шиклентерет. Министр палăртнă тăрăх, республикăра пурлăх пулăшăвĕпе тивĕçтересси аван йĕркеленнĕ. Сăмахран, 2019 çулта «Саба», «Тюлячи», «Химград» промпаркĕсене аталантарма кăна 793 миллион тенкĕ уйăрнă. Республикăн бюджетне кура ку мероприятисене пĕтĕмпе 979 миллион тенкĕ уйăрнă. Федераллă бюджета хутшăнтармасăр республикăра тепĕр виçĕ промпарк – «Уруссу», «Арск», «Пăва» – тăваççĕ.

«Пĕтĕмлетсе каласан, асăннă 5 проекта пурнăçлама ку çулта 2,635 миллиард тенкĕ тăкакламалла. Çав шутран 1,555 миллиард тенки федераллă бюджетран кĕни», – терĕ экономика министрĕ.

Çĕнĕлĕхсен шутне пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна майĕпен цифра çине куçарассине кĕртмелле. Министр шучĕпе, ку бизнес ĕçĕнчи условисене самай лайăхлатма пулăшĕ. Октябрь уйăхĕнчен пуçласа тимĕр чĕр таварпа ĕçлекен пĕчĕк тата вăтам бизнеса «Туянусемпе ĕçлессин центрĕ» цифра платформипе çыхăнтарас эксперимент пуçланнă. Вăл искусствăлла интеллект çинче никĕсленнĕ, çак сферăра пулса иртекен кашни утăма – бухгалтерирен пуçласа сделкăсем туни таранччен – тĕрĕслеме май парать.

Министр шучĕпе, ку малашне бизнеса тӳрĕ çул çине кăларса криминалтан хăтăлма пулăшĕ. Вăт çапла.

Ирина ТРИФОНОВА.

сарӑхнӑ сӑнӳкерчӗк

АЙӐПСӐР АЙӐПЛИСЕМ

Сулахайри сӑнӳкерчӗкре Марфа, сылтӑмра – Краха, хӗр чухнехи хушамачӗ Патшина пулнӑ. Вӗсем Апас районӗнчи Черккӗн ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Иккӗшӗ те Теччӗ районӗнчи Аслӑ Ӑнӑ ялне качча тухаҫҫӗ. Марфа Григорий Емельянович Корсакова (1887 ҫулхи), Краха Калта Ҫемьюнне (Семен Дмитриевич Запасова, 1880 ҫулхи).

1930 ҫулта Кӗркурипе Ҫемьюна кулак тесе айӑплаҫҫӗ те ҫурчӗсене туртса илеҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗхне колхоза (ун чухне «Большевик») параҫҫӗ. Хӑйсене март уйӑхӗн вӗҫӗнче арестлеҫе май уйӑхӗн 15-мӗшӗнче лагере ӑсатаҫҫӗ.

С.Д.Запасов.

Ҫав ҫулах июнӗн 27-мӗшӗнче Крахапа Марфана та халӑх тӑшманӗсен шутне кӗртсе Чӑваш Енри Елчӗк тӗрмине кайса хупаҫҫӗ. Кӑшт вӑхӑт иртсен Марфа тӗрмере вилет. Тӑванӗсем ӑна ял масарне пытарас шутпа Ял советне пулӑшу ыйтма каяҫҫӗ. Анчах Ял совечӗн ертӳҫипе куштан большевиксем: «Халӑх тӑшманӗн арӑмне ялта пытарттармастпӑр», – тесе кӑларса яраҫҫӗ.

Корсаков Григорий арӑмӗн виллине ҫӗрле, коммунистсенчен вӑрттӑн тата хӑйӗн амӑшне, Крахана, атте Прокопий Запасов тӗрмерен лашапа илсе килет. Марфана ҫӗрлех пытараҫҫӗ.

Тутарстан Республикин Асӑну кӗнекинче ҫырнӑ тӑрӑх, асаттене 1989 ҫулта кӑна реабилитацилеҫҫӗ-ха. Лагерьтен чирлесе таврӑнать вӑл. 1937 ҫулта Ярославль хулинче вилсе каять. Асаннене Крахана 1995 ҫулхи ноябрӗн 21-мӗшӗнче кӑна реабилитацилесе ырӑ ятне таврӑраҫҫӗ. Вӑл мӗн ӗмӗрӗпех Аслӑ Ӑнӑ ялӗнче пурӑнчӗ, 1967 ҫулта ҫут тӗнчерен уйрӑлчӗ.

М.Корсакова.

А.Г.Запасова.

Ҫакӑн пек синкер шӑпаллӑ пулнӑ манӑн сывӑх ҫыннӑмсем. Айӑпсӑр айӑпланнӑскерсем хӑйсен ырӑ ятне таврӑрнине сывӑ чух кӗтсе илеймен.

Валентин ЗАПАСОВ.
Теччӗ районӗ,
Аслӑ Ӑнӑ ялӗ.
Ҫемье архивӗнчи
сӑнӳкерчӗксем.

ҫарӑмсан районӗнче

ҪУЛ ТУСА ПАНӐШӐН ЧӖРЕРЕН ТАВ

Ҫарӑмсан районӗнчи Кивӗ Шешкелпе Кивӗ Ӳтемӗш ялӗсен хушшинче 2000 ҫултах асфальтлӑ ҫул тунӑччӗ. Каярах Ачалга ҫырми урлӑ каҫма ҫӗнӗ кӗпер те туса пачӗҫ. Унтан Хир урамӗ тӑршшӗпех сывӑхри карьертан шурӑ тӑм турттарса ҫул турӗҫ. Анчах та вӑл ҫуллен лапчӑнса пырса калле ҫӗрпе танлашрӗ, транспортпа ҫӳреме йывӑрланчӗ.

Кӑҫал тинех лару-тӑру улшӑнчӗ: «Татавтодор» ПАО Аксури филиалӗн тата Ҫарӑмсанри участокӗн ӗҫченӗсем Кивӗ Шешкел ҫулӗ ҫине малтан хӑйӑр, унтан Нурлатран вак чул тиесе килсе сарчӗҫ. Ҫурхи шыва юхмашкӑн пӑрӑхсем хурса хӑварчӗҫ. Халь пирӗн ял урамӗнчи ҫул та аванланчӗ.

Ҫул туса панӑшӑн "Татавтодор" ПАО пуҫлӑхӗсене, асӑннӑ предприятин Аксури филиалӗпе Ҫарӑмсанри участокӗн начальникӗсене, мастерӗсене, водительсене, трактористсемпе бульдозеристсене, автокрановщиксене, рабочисене, Кивӗ Ӳтемӗш ял хутлӑхӗн пуҫлӑхне Р.С.Мингулова, Ҫарӑмсан муниципаллӑ районӗн пуҫлӑхне Ф.М.Давлетшина, ҫул тӑвас ӗҫе хутшӑннӑ пур ҫынна та Кивӗ Шешкелте пурӑнакан кашни ҫын ятӗнчен тав тӑватпӑр.

Евгений ИЛЮХИН.
Кивӗ Шешкел.

ҫӗпрел районӗнче

БИБЛИОТЕКӐРИ МУЗЕЙ

Упире пурӑнакансем тӑван халӑхӑн йӑли-йӗркине упрас, историйӗпе культурине тӗпчес, ӑруран ӑрӑва парса пырас енӗпе нумай ӗҫ тӑваҫҫӗ. Авалхине пӗлни унччен хипе паянхине ҫыхӑнтарма, хамӑр несӗлсене асра тытма май парать.

Ҫак задачӑсене пурнӑҫлама музейсем нумай пулӑшнине шута илсе Упи ялӗн библиотекинче «Чӑваш тӗрри» мини-музей уҫӑлчӗ. Кунта экскурсие килекенсен йышӗ те ӳссех пырать. Библиотекарь вӗсем валли ятарласа викторинӑсем хатӗрлет, ватӑсене чӗнсе ӗлӗкхи ҫинчен каласа пама ыйтать. Мини-музейре экспонатсен шучӗ те ӳссех пырать.

Ирина ПАВЛОВА.
Упи ялӗ.
Автор сӑнӳкерчӗкӗ.

лениногорск районӗнче

ВАТӐСЕНЕ ХИСЕП ТУСА

Октябрӗн 1-мӗшӗнче Лениногорск районӗнчи Ҫӗнӗ Шешкел шкулӗнче уяв пулчӗ. Хамӑр пата эпир шкулта ӗҫлесе тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ ҫынсене йыхравларӑмӑр. 39 ҫул чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентнӗ К.У.Матвеева, нумай ҫул шкула тирпей кӳнӗ С.Т.Ванюкова, Е.Е.Саушкина, Ю.А.Яковлева пирӗн сӗнӗве йышӑнса хапӑл тусах килчӗҫ.

Уяв савӑнӑҫлӑ иртрӗ: ачасем хӑнасене юрласа, ташласа савӑнтарчӗҫ, чечексем парнелерӗҫ. Хӑнасем килнӗ ҫӗре ӳкерчӗксен куравне те тунӑччӗ.

Асаннесемпе кукамайсем ачасене тав турӗҫ, ырӑ сунса, пехиллесе сӑмах каларӗҫ. Уяв малалла тулӑх сӗтел хушшинче тӑсӑлчӗ. Хӑнасемпе шкулта хальхи вӑхӑтра ӗҫлекенсем асаилӳсен калаҫӑвне пуҫларӗҫ. Пурте пӗрле юрӑсем юрласа йӑпанчӗҫ, чунӗсене килентерчӗҫ.

Каяс умӗн хӑнасем шкул тӑрӑх утса вӗренӳ кабинечӗсене курса тухрӗҫ. Хӑйсене йыхӑрнӑшӑн тав турӗҫ.

Антонида САУШКИНА,
директорӑн воспитани енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ.
Ҫӗнӗ Шешкел.

елабуга районӗнче

КӖР ПАРНИ



«Кӗр мӑнтӑрӗ» тетпӗр ҫулталӑкӑн ҫак тапхӑрӗ пирки. Авалтан кӑмӑлланӑ халӑх ҫак вӑхӑта. Тепӗр тесен, мӗншӗн юратмалла мар? Пахчара, садра, хирте ҫитӗннӗ ҫимӗҫсене пӗтӗмпех пухса кӗртнӗ, хӗл каҫма хатӗр.

Мӗн кӑна ӳстерместпӗр тата халь хамӑр пахчара: Астрахань тӑрӑхӗнчи пек арбузпа, Узбекистанри евӗрлех дыньӑпа, Молдавири пек виноградпа никама та тӗлӗнтереймӗн. Ҫулран ҫул акса ӳстерекен хӑнӑхнӑ пахча ҫимӗҫсем те тепӗр чух калӑпӑшӗпе, тутипе тӗлӗнтереҫҫӗ.

Акӑ Елабуга районӗнчи Елово ялӗнче пурӑнакан Винуля Маркеловнӑпа Владимир Николаевич Николаевсем те хӑйсен хуҫалӑхӗнче 21 килограмм таякан пылак кавӑн ҫитӗнтернӗ.

Василий ТУРХАН.
Автор сӑнӳкерчӗкӗ.

ÇĔПĔР – АТĂЛ

Çĕпĕрте чăмăртанмашкăн хал çитернĕ-çке чăваш. Вăл йăваш тесе, тархасшăн, эс, тăванăм, ан арпаш. Çĕпĕр çыннин масине вăл халь те аванах упрать. Ĕмĕр уттинчен юлмасăр вирлĕн талпăнса утать.

Халăхăн чи пĕлтерĕшлĕ палли чĕлхе шутланать. Ытти – çăкăр хытти çеç. Халăх историне тĕпчес кăмăлу пулсан, унăн чĕлхинчен пуçламалла. Çак чăнлăх ансат та чи тухăçли. Манăн та чĕлхерен пуçлама тиврĕ. Пĕлнĕ ĕнтĕ – чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен йышĕнчен. Анчах вăл ыттисенчен кăшт айккинерех тăрать. Унăн хăй евĕрлĕхĕсем нумай тĕпчевçе минретнĕ вĕт. Тĕнче чăваш халăхĕн ятне шăп та лăп çав хăй евĕрлĕхсене пула илсе асра картнă.

Красноярск крайĕнчи Кан юханшыв тăрăхĕнче пурăнакан камасинсен (тĕрĕсрех *калмăшсен*) чĕлхинче япала ячĕсем нумайлă хисепре *-санг/-сенг* аффикслă; çак аффиксĕ вĕсен пусăмсăр (ударенисĕр). Вăл чăвашсен ялан ударениллĕ *-сам/-сем* аффиксĕпе тан. Анчах Чăваш Енĕн хăш-пĕр ялсен калаçăвĕнче те çак аффикс, калмăш чĕлхинчи пек, пусăмсăр: *тăвансем, килтисем*. Тата калмăшсен çĕрĕнчен инçех мар çĕр çухрăма яхăн Джебаш ятлă ту хырçи тăсăлать. Çав ту çинчен Джабаш шыв юхса анать те Хакасире Абакан шывпа пĕрлешет. Мăн асаттесем ăна Чăпаш е Шупаш тенĕ пуль. Çак таврара вĕсем куçса çӳрекен калмăшсемпе юнашарах пурăннă-тăр, пĕр-пĕринпе вăрах хутшăнма пултарнă. Кунтах тата кет чĕлхиллĕ кӳршĕсем – аринсемпе ассансем – пурăннă.

Красноярск крайĕн кăнтăр пайĕ Тыва Республикипе чикĕллĕ. Тывара Енисей пуçланать. Ăна Чăваш (картта çинче Чаваш) ятлă юпăллă Хамсара шыв юхса кĕрет.

Калмăш чĕлхинче эпĕ 18, кет чĕлхинче 27 чăваш сăмахĕпе тан сăмахсем тупрăм. Кусем çинчен статья пичетлерĕм (ЛИК, 2007, 2 №). Анчах пирĕн ăсчахсем, фактсем «çухăраççĕ» пулин те, шарламарĕç. Такам вĕсене шăппăн ларма хушу панă пек. «Чăвашра критика çук» текен каларăша аса илтерчĕç.

Кăнтăр Çĕпĕрти халăх, тăхăм, ял-хула, юханшыв ячĕсене Вăтам Атăл тăрăхĕнчи пĕрешкел ятсемпе танлаштарса тĕпченĕ хыççăн «КИЛ» журналта (2010, 1 №) пысăк статья пичетлерĕм (ку темăпа маларах сăмах калакансем пулнă-ха: А.С.Канюкова, В.Ф.Каховский). Унтанпа тăхăр çул иртрĕ – Гуманитари институчĕн ятлă ăсчахĕсем хулăн кĕнекесем кăларчĕç, пĕринче те Кăнтăр Çĕпĕрти «чăвашла» топонимсене асăнмарĕç. Ирĕксĕрех вĕсене чăвашăн чăн историйĕ кăсăк мар пуль тесе ăнланма тивет.

Удмурт Республикинче икĕ районта Варсем тата икĕ районта Уарсемпе Уварсем ятлă ялсем пур. Мĕншĕн Варсем, Уарсем, Уварсем кăна? Урăх *-сем* аффикспа пĕтекен ят çук. Çакăн тупсăмне уçса палăртма питĕ нумай тăрăшмалла. Акă çут тĕнчен тепĕр пĕчĕк вăрттăнлăхĕ: Удмурт Республикипе Чăваш Енре *çĕр аллă* ытла пĕр ятлă ялсем. Пĕлессĕр килет пулсан, тархасшăн – вулăр, танлаштарăр та асра тытăр. Тата çак ыйтăва хурав пама тăрăшăр: кам лавĕ çинчен ӳксе юлнă çак ял ячĕсем? Списокра удмурт ялĕсен ячĕсем сулахайра, сылтăмрисем – чăвашсен (сире кăсăкрах пултăр тесе Тутарстанри темиçе чăваш ялне те кĕртрĕм, тата пĕрер – Пушкăртстанран, Киров, Самар облаçĕсенчен).

Петр МУЛЬДИЯРОВ.

Удмуртрисем:	Чăвашрисем:
Азаматово	Асамат
Акчашур	Акчел, Акчикасси
Алгазы	Алгазино/Малти Ишек
Алмач	Алманч, Алманчă, Алманчăк
Алнаши, Ильнеш	Илнеш
Андрейшур	Энтриел/Энтрияль, Энтри Пасар
Асан	Асанкасси
Асинер	Синер
Баграш-Бигра	Пакраш/Баграж (ТР)
Бажены	Вашенкасси
Базаны	Пасна
Байгуши	Пайăк, Пайтуш
Байтеряково	Патирек/Байтеряково
Балаки	Палакасси
Балашур, Балы	Пăлапуç Нурăс, Пăлапуç Пашьел
Балезино	Пăлаçи Атăк
Басурманы	Пăсăрман
Башкировка	Пушкăрт, Пăшкăрт, Пошкар
Бегеш, Бегиши	Пакăш
Бертло (Кир.обл.)	Пӳртлĕ
Биляр	Пӳлер (ТР)
Ниж. Бисарки	Писер, Пӳс(ĕ)рек (ТР)
М.Бодья	Патти
Б.Легзя	Элекçей Тимеш
Б.Юнда	Юнтапа
Бугай	Пăкăян/Бугуян
Бурмакино	Пăрмас
Валамаз	Пăрмас, Вăлпуç
Варсем (2)	Варпуç (2)
Валодар (2)	Улатăр/Алатырь
Васепи	Ваçкасси
Верх-Мургозь	Муркаш
Вичурка	Бичурга-Баишево
Гарга	Каркалар
Гари (2)	Карикасси, Карай
Гарк	Карăк, Карăкçырми, Карăклă
Главатских	Кăлава Шетмĕ
Гыркес	Кĕрекаç
Дым-Дым-Омга (Кир. обл.)	Тăмкасси
Дэмен	Аслă тата Кĕçĕн Чемен, Тăманкасси
Дусыково	Тускел, Тушкил
Ельцы	Елчĕк
Ермаково	Ермак
Жуки	Шукакасси/Жукино
Заризь, Ниж. Сырьез	Сыреç/Сыреси
Ӟачча	Ачча
Зура	Сăр/Сура
Ивашево	Йăвашкел/Ивашкино (ТР)
Инга, Юньга	Юнкăпуç
Ирым, М.Ирым, Оник-Ирым	Иремкасси Ямаш, Эрĕмкасси
Исаки, Исаково (2)	Исаково, Ишаки, Исаклă (Самар. обл.)
Ишек Нижний	Ишек (2), Ишеккасси (2), Ӳсĕк
Иштеряково	Иштерек
Казаково	Касаккасси

Удмуртрисем:	Чăвашрисем:
Кадиково	Катек, Кĕтĕквар, Катькас/Кадиково, Хачăк
Казан-Омга (Кир. обл.)	Хусанçи, Хусанушкăнь
Калмыки (2), Калмаки	Калмăккасси
Калугино	Калуккасси/Калугино
Камаево, Камайлуд	Камайкасси, Камайкас Чурачăк
Камбарка	Хăмаркка/Кумаркино
Камдор-Омга (Кир.обл.)	Кантуркасси
Камыжево, Камышево	Кăмаш, Кăмаша, Хăмăш
Карамас-Пельга	Карамалькасси
Карачево	Карач
Карачуй	Карачура
Карма	Кармал
Ст. Кармыж	Кармăш, Кăрмăш
Карчеткер	Çĕктер/Сюктерка
Катыши	Катăш Кошкă, Кăташ
Качешур	Качакасси
Квака, Кваки, Кваковай	Кăвакал
Кельдыш	Килтĕш, Кĕлкеш
Кестым, Костым	Кӳстӳмĕр, Çĕтĕк Кĕçтемĕр
Кибек-Пельга	Кипек
Кизнер	Кинчер
Ключи (много)	Кĕлешкасси, Хĕлеç, Хĕлеç Упи
Ковалево	Кавал (2)
Козловка	Козловка, Кĕслеяль
Комарово, Комары (2)	Кăмăркасси, Хăмаркка/Кумаркино
Комары	Хумри Ишек, Хумри Выçли
М.Кормых	Кармăш, Кăрмăш
Мадьярово	Мучар
Мамаево	Мамакасси
Мамлей	Мамликасси
Меметово	Мемеккасси
Мещеряки	Мишер, Мишеркасси (9)
Можга, Москашур	Москакасси
Мушкашур	Мошкасси
Мукши, Мокшин	Мăкшăм
Муллино	Муллино
Мучи	Мучикасси
Нерцы	Нĕрĕш
Нурызово	Нурăс
Ныргында	Нĕркеç, Нĕркеч
Озелино	Ӳсел (ТР)
Омга-вылa (Кир. обл.)	Ункăпуç
Оркино	Оркум, Урикасси (2)
Отогурт	Атикасси
Б. и М.Уча	Очăкасси
Паздеры	Пăчăрлă Пашьел
М.Палагай	Пăлаху
Парзи	Пархи
Паслоково, Пислег, Пислеглуд, Пислегово	Пăслăк (Пушкăртстан)
Палы, Палым	Палакасси
М.Полом	Паланкасси
Патраки, Патраково (2)	Патреккел, Патраклă (ТР), Патирек

Удмуртрисем:	Чăвашрисем:
Пармезь	Пăрмас
Пизеп	Писĕп
Пожгурт	Пошкăрт
Полынга	Паланкасси
Пурги	Пӳркел (ТР), Пархикасси
Салово, Саля	Сала ялĕ, Салакасси, Сала (3)
Санарино	Санарпуç
Санча	Сантикасси
Сарсак	Чартак
Сенькагурт	Санькасси
Сива, р.	Сĕве, ю.
Сундур	Сĕнтĕр
Сыран	Сăранкасси
Тосепи	Туçи
Трык, Новый Трык	Трак
Тукташ (2), Туктыши	Тукташ
Тупал Пурга	Туппай Сĕмĕл
Турай, Тураево	Турай, Тораево
Тылыклуд	Толиккасси
Тылыс	Тереç
Уарсем, Уварсем	Варпуç
Уди, Удино, Уди Бисарки	Очăкасси
Утор	Утар, Утаркасси
Чебаково	Ирçе/Чебаково
Чекан, Чеганда	Çăхан
Чекали, Чекалка	Шăхаль
Чекари, Чекерево, Чекурча	Чăкăр/Чигирь, Чекурча (ТР)
Чирка	Чирккасси (2)
Чермячкино	Чермĕш
Четкер, мыс	Çĕктер
Чувашайка	Чăваш Ишекĕ
Чультем	Шелттем
Чумой	Чемей
Чура (10)	Чуракасси (2)
Чутырь	Чутай
Шадрино, Шадрасак	Çатра, Çатракасси, Шатракасси
Шамердан	Шемертен
Шамшур, Шумшоры	Шĕмшер
Шапычак	Шăпчăккасси
Шолья	Шулю/Шоля
Шонер	Ушанар, Шинер Тăрăн, Шĕнер,
Шурма	Çырмакасси
Эгыр	Йĕкĕрвар
Эсеквал	Эсеккасси, Ӳсĕк
Эшмег	Эшменушкăнь
Юнда	Юнтапа
Юньга	Юнкă, Юнкăпуç
Юрюк	Йĕрĕхкасси
Юська, Ниж. Юсь	Йӳçкасси (2)
Яган, Верх. Ягино	Яхакасси
Ягул	Якурушкăнь
Ямайкино	Ямайкасси
Ярково	Ярак, Яракасси, Яраккасси
Ярумцево, Яромаска	Яранкасси, Йăлăмкасси
Ярославль	Ярăслав
Ярушки	Ярăска, Ярăскасси, Пĕчĕк Элĕк/Ярушкино

2019 – театр çулталăкĕ

ТЕАТР – АЧАСЕНЕ

Пирĕн çĕршывра 2019 çула Театр çулталăкĕ тесе палăртнă. Çавна халалласа çулталăк тăршшĕпех тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ. Акă юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрне Шупашкар, Красноармейски районĕсен шкулĕсенче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем, Патăрьел районĕн чăваш чĕлхипе литератури учителĕсем, Шупашкар хулин Н.В.Никольский ячĕллĕ колледж вĕренекенĕсем пухăнчĕç. Пурте капăр тумпа, чечексемпе – чăн-чăн уява килнĕ пек.

Тĕп хулари театра ачасене спектакль курма килме республика шайĕнчи «Театр – ачасене» проект май пачĕ. Проектăн тĕллевĕ – театрпа паллаштарса, спектакль кăтартса вĕренекенсене илемлĕхе алла илме пулăшасси тата вĕсен чунне çĕнĕ туйăмсем ăша хывасси.

Пурнăç аталанăвĕ вĕренӳ ĕçне сулсерен çĕнĕлĕх кĕртме ыйтать. Çавăнпа та ĕнтĕ вăхăт ыйтнине кура тата Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе килĕшӳллĕн палăртнă тĕллеве пурнăçлама, илемлĕх тĕнчине ăнкармашкăн хăнăхтарма, ачасене пур енлĕн аталантарма тарăн шухăшлă «Вĕри юнлă çемçе чун» спектакль суйласа илтĕмĕр.

И.С.Максимов-Кошкинский çак драмăра Чĕмпĕр чăваш шкулĕн пархатарлă пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне, И.Я.Яковлев, К.В.Иванов, Ф.П.Павлов, И.С.Максимов-Кошкинский кун-çулне питех те ăста кăтартнă. Тĕрĕссипе, автор хăйĕн геройĕсене хăй курнă, пĕрле вĕреннĕ, пĕр сывлăшпа сывланă… Чи кирли вара, Константин Ивановăн ХХ ĕмĕрĕн 1906 – 1912 çулĕсенчи Чĕмпĕрпе Слакпуçра вĕреннĕ-пурăннă вăхăчĕсене кăтартни пулчĕ. Кунта «Нарспи» поэма çурални, Константинпа Праскин телейсĕр юратăвĕ, Иван Яковлевпа Константин Иванов хутшăнăвĕ, Иоаким Максимовпа Федор Павловăн чăваш театрĕ пирки ĕмĕтленни, артистсем чăваш халăх юррисене чуна тивмелле чĕрĕ саспа илемлĕ шăрантарни тата ытти пулăмсем те пулчĕç.

Спектакль пынă чух ачасем хăйсем те сисмесĕрех савăнма, кулянма пуçлани тĕрлĕ курăмпа палăрчĕ. «Нивушлĕ сана юлашки хут куратпăр?» – тени пурин чунне хускатса, пăлхатса ячĕ. 25 çула çитнĕ, вĕри юнлă, çемçе чунлă Константин Иванов йывăр та сывлайми чирленине курма йывăр пулчĕ… Ачасен чунĕнче, спектакле тимлĕ сăнаса пăхса ларнă май, хальчен сисс курман туйăмсем вăранчĕç темелле. Вĕсен чун-чĕринче мĕн пулса иртнине калама та йывăр. Чылайăшĕн куçĕнче куççуль тухнине асăрхарăм. Йĕрекенсем те пулчĕç. Арçын ачасем шăла çыртса чышкине чăмăртаса ларчĕç. Хамăр та, аслисем, кăмăла аран-аран хытарса лартăмăр. Спектакль хаваслăх, савăнăç, уяв туйăмĕ çуратнипе пĕрлех пирĕн ăшра хĕрхенӳ, шеллев, тарăхупа ырату туйăмĕсене те вăратрĕ.

Артистсем пурте ăста вылярĕç. Спектакль вĕçленсен вĕсене чĕрĕ чечексем парса, чылай хушă хыттăн алă çупса тав турăмăр.

Театр усси, кирлĕлĕхĕпе пархатарĕ пурри уççăн курăнчĕ. Вăл ачасемшĕн чăн-чăн уяв пулчĕ. Чуна тасатакан йышĕнчи уяв тетĕп ăна. «Вĕри юнлă çемçе чун» драма шкул ачисене ырă витĕм пачĕ тесех шутлатăп. Вăл вĕсене пурнăçăн ырă-усал енĕсене курма, шухăшлама, тĕрĕслĕхе тытса пыма, кăмăла çирĕплетме пулăшакан спектакль пулчĕ.

Драмăра вылякан актерсен ăсталăхĕ пысăк шайра пулни палăрчĕ. Спектакль режиссерĕн – СССР халăх артисчĕн, РФ, ЧР Патшалăх премийĕсен лауреачĕн Валерий Яковлевăн çĕнĕ шыравĕ килĕшрĕ. Уйрăмах мана Г.С.Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци лицейĕнче вĕреннĕ, спектакльте питĕ лайăх выляна Аня Кудряшовăпа Света Захаровăна курма хавас пулчĕ. Эпĕ те вĕсене лицейра тăван чĕлхене кирлĕ шайра аванах вĕрентнĕ иккен. Ăста вылянăшăн тавах вĕсене! Тавах сана, чăваш театрĕ! Тепре тĕл пуличчен!

Геронтий НИКИФОРОВ,
Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ, Чăваш наци конгресĕн Вĕрентӳ комитечĕн ертӳçи.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

чăваш наци конгресĕ хыпарлать

ГЕОГРАФИЕ ЛАЙĂХ ПĔЛЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе географи факультечĕ тата «Вырăс географи обществи» Пĕтĕм Раççейри обществăлла организацин Чăваш Республикинчи уйрăмĕ шкулсенче 9-11 классенче вĕренекенсене Чăваш Енĕн географийĕпе туризмне аван пĕлекенсен конкурсне хутшăнма сĕнеççĕ. Конкурс «Открытая Чувашия: электронный учебник, открытые лекции, конкурсы и экскурсии» проект шайĕнче икĕ тапхăрпа иртет:

1-мĕш тапхăр – куçăн мар. 2019 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 15-мĕшĕччен пырать. Конкурса хутшăнас текенсен Чăваш патшалăх университечĕн Moodle (http://moodle.chuvsu.ru) платформинче регистрациленсе тестировани иртмелле: 30 минут хушшинче Чăваш Енĕн географийĕпе, туризмĕпе çыхăннă 20 ыйту çине хуравламалла. 100 балран 70 балл пухайнисем 2-мĕш тапхăра иртеççĕ.

2-мĕш тапхăр – куçăн. Декабрĕн 20-мĕшĕнче И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе географи факультетĕнче 14.30-ран пуçласа 17.30 сехетчен иртет. Кун йĕрки çапларах:

14.30 – конкурса уçни;

15.00 – 16.30 – конкурсăн 2-мĕш тапхăрĕ;

16.05 – 17.00 – факультетри музейсемпе паллашни;

17.00 – конкурса пĕтĕмлетни, çĕнтерӳçĕсене чыслани.

Куçăн мар тапхăрта 70 е ытларах балл пухнисене йĕркелӳçĕсем 2-мĕш тапхăра килме йыхрав ярĕç, ятлă сертификат тата асăнмалăх парне парĕç. Çĕнтерӳçĕсене вара Шупашкар хулипе Чăваш Ен тăрăх экскурсие кайма сертификат, парнесем тата дипломсем кĕтеççĕ.

Зоя ТРИФОНОВА,
«Открытая Чувашия» проект ертӳçи.

кун хыççăн кун

Октябрь, 26
Хĕвел: тухать – 6.36, анать – 16.18, кун тăршшĕ – 9.42. Уйăх: тухать – 3.25, анать – 16.13.
Пĕтĕм Раççейри гимнастика кунĕ.
Уйăх календарĕпе – *28-мĕш кун.* Пĕтĕмлетӳсем тума, кил-тĕрĕшри ваннă япаласене юсаса йĕркене кĕртме аван кун.

Октябрь, 27
Хĕвел: тухать – 6.38, анать – 16.16, кун тăршшĕ – 9.38. Уйăх: тухать – 4.55, анать – 16.30.
Автомобиль транспорчĕн ĕçченĕсен кунĕ.
Халăхсен хушшинчи хуняма кунĕ.
Уйăх календарĕпе – *29-мĕш кун.* Çĕнĕ ĕç тытăнма тăхтамалла, шухăшсене тĕплĕн шутласа пурнăçламалла,васкама кирлĕ мар.
Çак кун çуралнă: *Игорь Бутман (1961).*

Октябрь, 28
Хĕвел: тухать – 6.40, анать – 16.13, кун тăршшĕ – 9.33. Çĕнĕ уйăх (6 сехет те 54 минутран): тухать – 6.25, анать – 16.49.
Халăхсен хушшинчи анимаци кунĕ.
Халăхсен хушшинчи шкул библиотекисен кунĕ.
Раççейре асанне-кукамайсен, асаттекукаçейсен кунĕ.
Уйăх календарĕпе – *1/2-мĕш кун.* Малашнехи плансем пирки тĕплĕн шухăшламалла, хăш çулпа кайсан лайăхрах пулни пирки ыйтăва халех татса памалла.
Çак кун çуралнă: *Роман Виктюк (1936).*

Октябрь, 29
Хĕвел: тухать – 6.42, анать – 16.11, кун тăршшĕ – 9.29. Уйăх: тухать – 7.55, анать – 17.11.
Пĕтĕм тĕнчери инсультпа кĕрешмелли кун.
Комсомол çуралнă кун.
Уйăх календарĕпе – *3-мĕш кун.* Кăткăс ĕçсенчен хăрамалла мар, татăклă утăмсем тумалла.

Октябрь, 30
Хĕвел: тухать – 6.44, анать – 16.09, кун тăршшĕ – 9.25. Уйăх: тухать – 9.22, анать – 17.38.
Раççей Тинĕс-çар флотне никĕсленĕ кун.
Раççейре политика репрессийĕсенчен шар курнисене асăнмалли кун.
Инженер-механик кунĕ.
Уйăх календарĕпе – *4-мĕш кун.* Ку тапхăрта юхăма май «ишсен» аванрах.
Çак кун çуралнă: *Диего Марадона (1960).*

Октябрь, 31
Хĕвел: тухать – 6.47, анать – 16.07, кун тăршшĕ – 9.20. Уйăх: тухать – 10.41, анать – 18.12.
Пĕтĕм тĕнчери хуласен кунĕ.
Раççейре тĕрмесемпе СИЗО ĕçченĕсен кунĕ.
Уйăх календарĕпе – *5-мĕш кун.* Нумай ыйтупа проблемăна татса пама май пур çак кун.

Ноябрь, 1
Хĕвел: тухать – 6.49, анать – 16.05, кун тăршшĕ – 9.16. Уйăх: тухать – 11.51, анать – 18.57.
Суд приставĕн кунĕ.
Уйăх календарĕпе – *6-мĕш кун.* Профессипе çыхăннă сĕнӳсене сӳтсе явма лайăх тапхăр.
Çак кун çуралнă: *Анатолий Тимофеев (1938).*

поэзи кĕтесĕ

ĔНЕНӲ ТЕ ШАНĂÇ, ЮРАТУ

Ĕненӳ те шанăç, юрату –
Çыннăн чи таса туйăмĕсем.
Пурăнăç та пулĕччĕ тату
Вĕсемпе пулсан хутшăнусем.

Пĕринпе пĕрле пулсан тепри
Виççĕмĕш юлаймĕ вĕсенчен.
Шăп çавсем-çке пурăнăç тĕрри
Вăй илеççĕ çын чĕрисенче.

Ĕненӳсĕр юрату килмест,
Шанăççăр çемье чăмăртанмасть.
Кашни çын çакна вуçех пĕлмест,
Чун тени – вĕсемсĕр вăранмасть.

Çаксенчен кашни таса пулсан,
Чĕрере хăватлăн çуралсан,
Ĕмĕтсем те пырĕччĕç тулса,
Сар хĕвел те тухĕччĕ кулса.

Çут тĕнче те ялтрĕччĕ хитрен,
Пур пуянлăхне пире парса.
Çут йăл кулă çиçĕччĕ питре…
Турăçăм, çак ырлăха парсам!

Юрату ялан ман ĕмĕтре
Пулнă, пур, пулать те пурнăçра.
Пуринчен вăл хаклă та хитре
Çуралать чунра, савăнăçра.

Ĕненӳ те шанăç, юрату
Пулччăрах кашни пирĕн чунра.
Пурнăçу сан пулĕччĕ тату,
Вĕресен вĕсем ӳтри юнра.

Николай ДВОРОВ.

ЧĔРĔППЕ ЙĔКЕХӲРЕ

Юптару

Ват Кашкăр-Кашаман патне пĕрре
Ĕçе кĕмешкĕн пынă Чĕрĕппе Йĕкехӳре.
Ун-кун пăхкаласа илсен çиллес
Хуçа çырать приказ: «Илес!»
Пикенчĕç тăрăшса туссем ĕçе –
Хыçран çăра тусан кăна вĕçет.
Пĕрех вĕчĕленет усал Хуçа:
«Кам тирпейлет-ши манăн çи-пуçа?»

Кӳрши вăйпа ĕçленине курсан
Йĕкехӳре каять кĕç тарăхса:
«Патвар̆рăн ĕçлекен Чĕрĕп туса
Нихçан çитеймĕп ку ĕçре хăвса».
Унтан ват Кашкăр шухăшне сиссе –
Вăл йăскăннăн куçне илет хĕссе.
Юлташĕ тар кăларнă вăхăтра
Хуллен Хуçа патне шуса пырать.
Кĕрсе каять вăл Кашаман йăви ăшне:
Йăта-йăта тухать ун каяшне.
Тĕршĕнерех ларать Хуçа çумне:
Çула-çула вăл якатать ун хыт çăмне.
Пĕр айăпсăр Чĕрĕп çинчен вара
Суя сăмах сарать йĕри-тавра…
Пурте куратăр, мĕн каламалли,
Йĕкехӳре халь… Кашкăрăн сылтăм алли.
Ун пур веçех хăйне мĕскер кирли…
Çапла: ку пурнăçра пулать тĕрли.
Ĕçчен Чĕрĕп вара паян кунччен
Çĕрте чакаланать, пурнать тĕм айĕнче.

***

Сыхланăр: йăпăлтишĕн чыслăх çук.
Вăл хăйшĕн çеç тăрăшнă чух
Такам чунне кĕрет авкаланса-шуса:
Чи çывăх юлташне сутать висĕ пуса.

Николай ЛАРИОНОВ-ЙĔЛМЕЛ.

кĕнеке çӳлĕкĕ

АСАМЛĂ КĔСКĔ ЭРЕШĔСЕМ

Хамăр çинчен хамăр пит каламастпăр, çырмастпăр пулин те пире ют çĕршыв çыннисем асăрхаççĕ иккен. Сăмахран, Польша çынни – çыравçă, журналист, историк, ирĕке юратакан (XIX ĕмĕрти пăлхава хутшăннă) Агатон Гиллер (1831–1887) 1854 çулта, Раççей çĕрĕ çинче Атăл тăрăх çуран пынă чух пĕр вăхăтра (Çĕпĕре каторга ĕçне янă ăна) Чăваш Енре пурăннă. Çав вăхăтра вăл чăвашсен йăли-йĕрки, культури çинчен нумай материал пуçтарнă. Чăваш халăхĕ ăна питĕ интереслентернĕ, уйрăмах хĕрсен, хĕрарăмсен тумĕ, эрешĕ. Чăваш тумне вăл юнашар пурăнакан мари (çармăс) халăхĕн тумĕпе танлаштарса ак çакăн пек çырса хăварнă: «Костюм чувашек красивее и богаче, нежели у черемисок. Носят они длинные белые полотняные платья, которые на плечах, груди и по всему рукаву вышиты всевозможными узорами, звездами, точечками, листьями… и разными фигурами… Подобная обработка… требует много времени, и чем пестрее они (эти ткани) будут, тем лучше. Одеяние препоясано широким поясом, концы вышиты… С шеи на перси спускается кожаный щиток, который бывает разных размеров, никогда полностью грудь не закрывающий; щиток тот или наперсник увешан монетками и… бляшками…» Чăваш хĕрĕсен тумĕнчен вăл питĕ тĕлĕннĕ: «…девушка в нем (костюме) издалека походит на букет распустившихся цветов…» Агатон Гиллер чăваш хĕрĕсен йăлтăртатакан хура çӳçĕсен илемĕпе киленнĕ, хăюллă пăхакан çутă куçĕсенчен тĕлĕннĕ. Чăваш арçыннисен вăйпиттилĕхĕнчен те тĕлĕннĕ: «В широких плечах и могучем теле видны здоровье и мощные мускулы…» Çак йĕркесене вуласан паянхи чăваш çынни мăнаçланма пултарать. Паянхи куна мĕнле сыхланса юлнăха пирĕн тум, эреш? Кашни кун тăхăнакан чăваш кĕпине çĕлекенсем, тăхăнакансем нумай-и пирĕн хушăмăрта? Шел пулин те, халĕ кашни кун чăваш кĕпи (повседневное чувашское национальное платье) тăхăнакансем сахалланса пыраççĕ (сцена çинче е пĕр-пĕр мероприятире тăхăннине кунта шута илместпĕр). Çапла пирĕн чăваш кĕпи сисĕнмесĕрех пирĕн хушăмăртан кайса пырать. Ку пĕрре. Тĕпре вăл – чăваш тумне, тĕррине тĕпчесси.



Чăваш тумне, эрешне тĕпчекенсем паянхи кун питĕ сахал. Анчах та пур. Вĕсенчен пĕри – Чăваш тĕррин музейĕнче ăслăлăх сотрудникĕ пулса ĕçлекен Наталья Ивановна Захарова-Кульева. Нумай пулмасть унăн «Волшебные узоры *кĕскĕ*. Асамлă кĕскĕ эрешĕсем» (2019) альбом-каталогĕ тухрĕ. Ăна Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă. Кĕнекене питĕ хитре, тĕрлĕрен тĕспе усă курса пичетленĕ: чăваш эрешĕсен пуянлăхĕ яр уççăн курăнать. Çакна та каламалла – Чăваш наци музейĕн фондĕнче упранакан кĕскĕсене пĕрремĕш хут кĕнекере пичетлесе кăларнă. Вăл кĕскĕсене XVIII–XIX ĕмĕрти чăваш хĕрарăмĕсем тĕрленĕ.

Кĕнекен «Из истории узоров *кĕскĕ*. Кĕскĕ эрешĕн историйĕнчен» ум сăмахне Н.И.Захарова-Кульева икĕ чĕлхепе çырнă: чăвашла тата вырăсла. Вăл унăн тарăн тĕпчев ĕçĕ пулса тухнă. Кĕскĕ эрешĕсене çырса кăтартни кĕнекен пысăк пайне йышăннать. Унта Чăваш наци музейĕнче упранакан кĕскĕсем çинчен çырса кăтартнă, вĕсен ӳкерчĕкĕсене илсе панă, ăçтан (ял, район), кам панисене те палăртнă. «Тĕрĕ – халăх пултарулăхĕн мĕн авалтан упранса юлнă пуянлăхĕн пĕр тĕсĕ. Чăваш наци музейĕнче паянхи куна сурпансен, пилĕке çыхакан сарă-яркăчсен, ал шăллисен, пит шăллисен, кĕпесен тата йăла-йĕркепе çыхăннă ытти тĕрĕллĕ япаласен интереслĕ пуххисем йĕркеленнĕ», – пуçлать Наталья Ивановна хăйĕн ум сăмахне. Çак кĕнекере пуян музей коллекцийĕн пĕр пайне – хĕрарăм кĕпин пĕвĕ çумне çĕлесе хума хатĕрленĕ мăшăр эрешлĕ пир татăкĕсене – ***кĕскĕсене*** – кăтартса панă. Кĕнеке авторĕ каланă тăрăх, кĕскĕсен шучĕ – 235 тĕслĕх. «Чăвашсем çак татăка *сыпмалли* (*сып* глаголтан пулнă) тенĕ, мĕншĕн тесен ăна кĕпе пĕвĕн кăкăр умне хушса çĕленĕ. Унăн вăтам пысăкăшĕ – 40х37 см. XIX ĕмĕр çурриччен çак пир татăкĕсене елмен (эрмен) пурçăнĕпе анчах тĕрленĕ. Çемçе те йăлтăркка çип эрешсене тата пуянрах, селĕмрех кăтартнă. Ĕлĕкхи чăваш хĕрарăмĕсен сыпмаллисене çав тери сыпăçуллă, килĕшӳллĕ, килпетлĕ ăсталама пултарнă. Халĕ те вĕсем çине вĕçĕмсĕрех пăхса киленес килет», – çырать чăваш хĕрĕ Наталья Ивановна. Шăпах çак тĕрĕсене курса киленнĕ те ĕнтĕ Польша çынни Агатон Гиллер, Çĕпĕр çулĕ çинчен пĕр вăхăта Чăвашра пурăнма чарăннăскер.

«Хĕрарăм кĕпи татăкĕ çинчи çак пур енчен те çураçуллă эрешсене пирĕн несĕлсем *кĕскĕ* тесе ят панă. Хальхи чăваш чĕлхинче ку сăмах çук тесен те юрать, анчах та «куç кĕски» сăмах майлашăвĕнче паянхи кунччен «пытанса» пурăнать. Ытти тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсен те вăл çак пĕлтерĕшпех сыхланса юлнă. Ăна авалхи тĕрĕк словарĕнче (Древнетюркский словарь) те тупма пулать», – тесе ĕнентерет вулакана кĕнеке авторĕ Н.И.Захарова-Кульева.

Паллă этнографсем, тĕпчевçĕсем кĕскĕ çинчен çырса хăварни çинчен те тĕплĕн тишкерет автор. Тĕслĕхрен, Тутарстанăн мухтавлă ывăлĕн, Алексей Александрович Трофимовăн ĕçне палăртса хăварать: «А.А.Трофимов академик, искусствовед хăйĕн «Орнамент чувашской вышивки» (1977) ăслăлăх ĕçĕнче çак асăннă эреш композицине пирĕн эра пуçламăшĕнче пурăннă сармат йăхĕсен куç кĕскийĕсемпе танлаштарать. Вĕсене те тăватă енчен пĕрешкел çăлтăр евĕр эрешсемпе илемлетнĕ».

Кĕскĕсене мĕнле ялсенче пухнине те палăртнă. Теччĕ усĕнчен те пĕр кĕскĕ лекнĕ. Ăна хальхи Елчĕк районне кĕрекен Вырăскасси (Полевые Буртасы) ялĕнчен тупнă. «Çакна асра тытмалла: анатри чăвашсем те, анат енчисем пекех, улача çи-пуç çине куçиччен кĕскĕллĕ шурă кĕпесем тăхăнса çӳренĕ», – асăрхаттарать нумай çул çак темăпа ĕçлекен Н.И.Захарова-Кульева. Сăмах май, чăваш тумĕпе, чăваш тĕррипе Наталья Ивановна мĕн çамрăкранах – шкулта, университетра вĕреннĕ çулсенченех – интересленет. Хăйех çĕлет, хăйех тĕрлет. Мухтанма мар – чун ыйтнипе. Хăй несĕлне, хăй халăхне юратса.

Кĕнеке рецензенчĕ – Раççейĕн Наукăсен академийĕн Петр Великий ячĕллĕ Этнографипе антропологи музейĕн (Кунсткамера) ăслăлăхăн аслă сотрудникĕ Антон Кириллович Салмин. Чăваш материалне лайăх пĕлекен тĕпчевçĕ.

Автор «Асамлă кĕскĕ эрешĕсем» кĕнеке ум сăмахĕн вĕçĕнче çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă: «…Вĕсенче тĕп вырăнта яланах *ама йывăç* сăнарĕ. Хăш-пĕр эрешре ун вырăнне хĕрес, юпа, пучах йышăнаççĕ, çав тери сайра хутра (палласа илме те йывăр) – этем евĕр кӳлепе. Тăрăхла пăхсан вĕсем висĕ пайран тăраççĕ (мăшăр чĕрчунпа е кайăкпа). Çак эрешсенче темле кукăр-макăр йĕр те тĕл пулать, анчах чăваш хĕрарăмĕсем нихăçан та леш тĕнчене палăртакан çĕленкалтана (шуса çӳрекеннисене, шывра пурăнаканнисене) тĕрлемен. Кăкăр тĕлĕнчи çăлтăрсенче яланах этемпе юнашар пурăнакан чĕрчуна, кайăккĕшĕке кăтартнă, çапла вара вĕсем вăта çĕре палăртнă».

Кĕскĕ, унăн историйĕ çинчен, тĕрĕри эрешсем эпир пурăнакан çут тĕнчене палăртнине, чăваш хĕрарăмĕ мĕн-мĕн ӳкерсе хăйне, çитĕнтерекен ăрăва (ачине) упраса ӳстернине пĕлме пулать çак кĕнекепе паллашсан. Кĕнекере çав тери кирлĕ, паха материал. Эрешсен тĕкĕрĕнче хамăра, хамăн иртнĕ кунçула курма пулать. Чăваш культурипе интересленекен çынсемшĕн ку кĕнеке питĕ усăллă. Унсăр пуçне тата «Асамлă *кĕскĕ* эрешĕсем» – кашни чăваш хĕрарăмĕн сĕтелли çинче пулмалли кĕнеке.

Елена ФЕДОТОВА,
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

Владислав НИКОЛАЕВ

ЫТЛАШШИ... ЮРАТНИ

Калав

(Малалли. Пуçл. 40, 41№№.)

– Хитре вырăнта пурăнатăр эсир... – терĕ вăл чÿречерен тинкерсе. – Питĕ хитре вырăнта... Юмахри пек кунта...

Миккуль шăллĕ тем каласшăн пулнине паçăрах сисрĕ-ха тата ахальтен çула тухса килмен-ха ĕнтĕ вĕсем, миçе теçетке çул иртнĕ хыççăн шыраса тупма сăлтавĕ пулнах. Анчах кил хуçи ăна ыйтусем парса хумхантарас темерĕ, ахаль те леш пăшăрханчăк сăнлă – пăхсах паллă...

Униççе арçынсене сĕтел хушшине вырнаçма йыхравларĕ.

– Килтине хирĕç мар пуль? – ыйтрĕ Миккуль. – Енчен те кăмăлламасан лавккари те пур...

– Эс тата мĕн аташан? – пÿлчĕ упăшкине хĕрарăм. – Таçтан шăллу тупăннă та эсĕ ăна тата килтипе хăналасшăн-и – ан тĕлĕнтер-ха, Миккуль.

– Инке, инке теесех килет ман, тĕрĕс калать Миккуль тете, килтинчен ырри ним те çук – пуç та ыратмасть, шанчăклă та...

Çапах Униççе хистесех лавккаринех уçтарттарчĕ. Хăй те паллашнă ятпа пĕр черкке шалттипех ĕçсе пачĕ, арçынсем умлă-хыçлăн темиçе те пушатрĕç.

«Санькка, чăн та, каснă-лартнă Миккуль çав. Тен, кăштах кăна ватăрах курăнать-и... Çулĕпе унран чылай кĕçĕнрех пулсан та. Калаçни, тыткалани – йăлт Миккуль. Пулать вĕт, нимле экспертиза та кирлĕ мар кунта», – шутласа ларчĕ арçынсем çине пăхса танлаштарнă май Униççе.

– Тете... Эп... ахальтен тухман çула... – калас сăмахĕсем йывăррăн тухрĕç Санькккан, сасси кăштах чĕтренĕ пек те... – Тете, пирĕн анне вилес пекех аптрарĕ, санран каçару ыйтмасăр вилес килмест тет, сана илсе килме хушрĕ...

«Пирĕн анне тесе мĕн тесшĕн пулчĕши Санькка, санпа манăн анне тесшĕн-ши ĕнтĕ?» – шутласа илчĕ Миккуль, анчах ку шухăш мар-ха халь чи пĕлтерĕшли.

– Вăл халь те пурăнать-и вара? – маларах тăна кĕчĕ Униççе.

– Пурăнать... Пĕлтĕр çеç чиперех çÿретчĕ-ха, кун пек тăрсан ĕмĕре те çитет теттĕмĕр, кăçал пит тăрук йăшса кайрĕ, выртакаласах тăрать, – пуçне пĕкрĕ Санькка.

– Вара ма-ха хальччен килес темен вăл, мана курас темен, э-э, Санькка? – ыйтас темен çĕртенех тухрĕç сăмахĕсем кил хуçин.

– Халь ун пирки сăмахламалла-и, Миккуль? Аннÿ вилес пек выртать те, çула пуçтарăнмалла пуль ĕнтĕ, – хăтăрса илчĕ упăшкине Униççе.

– Эпĕ аннене темиçе çул каяллах пытарнă...

– Манман вăл сана, тете... Юлашки çулсенче уйрăмах аса иле пуçларĕ... Анчах килсе йăлтах каласа парсан эс ăнланмасран, çилленесрен шикленчĕ... Хăйĕн айăпне йышăнать, туять вăл, чи малтан çакна ăнлан, тете... – Санькккан куçĕсем Миккуль çине тилмĕрсе пăхрĕç.

Ю.Капитонов ÿкерчĕкĕ.

– Халь тин мĕн кÿренесси-çилленесси ĕнтĕ, ун кăна мар, пирĕн те ĕмĕр иртнĕ... – хушса хучĕ Униççе. – Юрать, ыран ирпе пуçтарăнса пырăпăр эппин...

Миккуль арăмĕ çине пăхса илчĕ: «Мĕн эс кунта маншăн шутласа ларатăн?» – тенĕн.

– Инке, эп сире паянах илсе каясшăн-ха... Илсе каятпăр та, хамăрах леçсе яратпăр каялла – ан пăшăрханăр. Анне ытла начарланса кайнăран калатăп, тен, шутлă сехечĕсем çеç юлнă пуль... – пĕрре инкĕшĕ, тепре тетĕшĕ çине пăхрĕ Санькка.

– Кайма хамăр машинпах кайăпăр-ха, сире чăрмантармăпăр, – ура çине çĕкленчĕ Миккуль. – Униççе, кăмпа-çырла тавраш, юрми-çурмине, аш-пăшне хатĕрле, эп Виталипе Олег патне шăнкăравлам-ха – хăшĕ те пулсан ерçет пуль. Эс лар-ха, Санькка, эпир наччасрах хатĕрленсе çитĕпĕр...

Паллашнă ятпа тесе темиçе черкке ĕçрĕç пулин те Миккуль Санькккана «шăллăм» теейменрĕ-ха.

Мĕн вăл ытлă-çитлĕ пурăнаканшăн хăнана пуçтарăнса тухса каясси? Тĕрлĕ-тĕрлĕ кăмпине, çырла компот-варенине, кăвакал-хурне багажник туллиех тултарчĕ Униççе. Вĕсем пиллĕкĕн çула тухрĕç: Миккульпе Униççе те тата вĕсен ялта тĕпленнĕ ачисем – Витали, Олег, Валя.

...«Вăйлă пурăнать тете. Вырăнĕ мĕн тери илемлĕ, урамранах вăрман пуçланать», – шутласа пычĕ çак вăхăтра Санькка.

– Мĕнле пек, кĕрÿ, аван вырăнта пурăнаççĕ вĕт Миккуль тетесем? – кĕрĕвĕн шухăшне пĕлесшĕн пулчĕ тата вăл.

– Мана питĕ килĕшрĕ, вăрманĕ те çумрах, улăхĕ те мĕн тери аслă – выльăха çÿретме аван ĕнтĕ, – терĕ Вадим. – Вăрманĕ пуян тата, кăмпи-çырли те, милĕкĕ-шăпăрĕ те ал айĕнчех темелле.

– Ан та кала... – килĕшрĕ Санькка. – Пирĕн пек милĕкне те укçалла туянса тăккаланмалла мар çав.

– Эп вăрманта çÿресе курманскер те мĕн чухлĕ кăмпа тупрăм ав, Миккуль тете мĕн тери хитре кăрăçсем касса тухнă – ырлăхра пурăнаççĕ, сăмах та çук, – пĕтĕмлетрĕ кĕрĕвĕ.

– Ырлăхра çав – куна эс питĕ тĕрĕс каларăн... – шăппăн каласа хучĕ ватти. Унтан шухăша путрĕ, мĕн шутланине вăл çамрăка пĕлтерес темерĕ: «Çавăнпа та паллă мар-ха, камăн кÿренмелле кунта. Эпир нушаллă ÿснĕ чухне вăл кунта тем тесен те пирĕн чухлĕ терт тÿсмен, пирĕн пек выçă та ларман, хĕллехи сивĕсенче те ĕнтĕркесе çывăрман. Мĕн кÿренмелли аннене? Тем тесен те амăшĕ вĕт-ха вăл, ма пырса курас темен ĕнтĕ тата...»

...Çав вăхăтра тепĕр машинăра урăхларах калаçу пычĕ.

– Атте, вара пĕлмен-им эс сан тепĕр аннÿ те пуррине? – тÿртен ыйтрĕ Витали.

– Тĕшмĕртнĕ... – пĕр сăмахпа кĕскен хуравларĕ ашшĕ.

– Асаннĕр виличчен уçса хăварчĕ вăл вăрттăнлăха, каласа пачĕ, – хушса хучĕ Униççе. – Эп пĕлмен çав, пĕлнĕ пулсан...

– Мĕн вара пĕлнĕ пулсан? – чăр-р! пăхса илчĕ арăмĕ çине Миккуль.

– Атте, асанне каласа хăварнă хыççăн вара унта кайса килес-тăвас темерĕн-и? – каллех тĕпчерĕ Витали.

Туять Униççе, калаçас килмест упăшкин ку ыйту тавра, унăн шухăшĕ халь пачах урăххи пирки, чунĕ те вăркать пуль, çавăнпа та май килнĕ таран ăна пулăшма тăрăшрĕ:

– Асаннĕр пĕлместчĕ çав вăл хăш ялтан иккенне... Аслаçăр хăй вăхăтĕнче те каланă пулнă ăна, те каламан та – ял ятне астумастăп терĕ çав...

– Тата вăхăт мĕн чухлĕ иртнĕ те, кам шутланă вăл ку таранччен пурăнать тесе, – хушса хучĕ Миккуль.

– Пире ма каламарăн, тупаттăмăр ĕнтĕ, район тени республика мар вĕт, – калаçăва хутшăнчĕ Валя, шкулта учительте ĕçлекенскер.

– Каларăн та эс, – тĕртсе илчĕ йăмăкне Олег. – Шутласа пăх-ха эс, хăçан пулнă вăл? Вăрçă умĕн. Вăл вăхăтри çынсем шутлă юлнă халь, чылайăшĕ хăйсем те ачапча пулнă – кам мĕн астутăр?

– Тата ман хушамата кăна мар, атте ятне те улăштарса çырнă, ятăма çеç хăварнă – терĕ ашшĕ. – Эпĕ хамăр ялтах çуралнă пек тутарттарнă атте, ун чухне вăл районта пысăк вырăнта ĕçленĕ те май пулнă ĕнтĕ хутсене кирлĕ пек майлаштарма...

– Шырас пулсан та тупмалла ан пултăр тенĕ пуль ĕнтĕ, – шухăшне пĕлтерчĕ Витали. – Кун пек – пурнăçу таса хутран пуçланать, никам та йĕрне-шывне тупаймасть.

– Ара, кам шутланă ун чухне ыран-паян вăрçă пулать тесе, пурте телейлĕ пуласлăх пирки ĕмĕтленнĕ, – терĕ Олег. – Ахăртнех, асатте те çав шутпах хутсене тасатнă: никам та чăнне ан пĕлтĕр, ывăлĕ те ан иккĕлентĕр тенĕ пуль ĕнтĕ. Çын-мĕн тем те пĕр каласан та, ак курăр, пирĕн хутсем пур, пичет те пур, унта йăнăш çырма пултараймаççĕ – тархасшăн, каçарăр, эсир такампа арпаштаратăр...

Унтан пĕр хушă шăп пычĕç вĕсем.

– Атте, кĕçех çитетпĕр, çак çырма урлă каçнă хыççăн пулать вăл ял, – терĕ руль тытса пыракан Олег.

– Мĕн тейĕн ĕнтĕ? – кур-ха, учитель пулсан та питĕ тÿрккессĕн ыйтрĕ хĕрĕ ашшĕнчен.

«Мĕн калăп? Мĕнле тытмалла хама? Мĕнле кĕтсе илĕ вăл мана?» – ку шухăшсем килĕ умĕнчен хускалса кайнăранпах канăç памаççĕ-ха Миккуле. Тен, хĕрĕ çапла тÿрремĕн ыйтни аван та пулчĕ.

– Пĕлместĕп, – терĕ ашшĕ шăппăн.

– Лару-тăру хăйех кăтартĕ унта, атте, ытла ан пăлхан тулккăш, – водительпе юнашар малти ларкăч çинче ларакан Витали çаврăнчĕ те ашшĕн аллине чăмăртарĕ. – Пăлханса ан кай ытлашши, юн пусăмĕ ÿссе кайĕ тата...

– Эх, чечек çыххи илмеллечĕ иккен район центрĕнче чарăнса, пуç ĕçлемерĕ ĕнтĕ, – тем манса хăварнăн ăшталанса илчĕ Валя.

– Эп шутларăм-ха чечек çинчен, анчах темлерех-ха вăл халхи самантра, – терĕ амăшĕ. – Те вырăнлă пулать, те – çук. Ытла йывăр выртать пулсан, темле, урăхларах шутлама пултарĕç...

(Малалли пулать.)

02 хыпарлать

ÇĂВАРНА ХУП!

Октябрĕн 9-мĕшĕнче Элмет хулин пĕр шкулĕнче урок пынă вăхăтра вĕрентекен 1-мĕш класс ачин çăварне скотчпа çыпăçтарса хунă. Кун çинчен йĕрке хуралçисене ачан ашшĕ-амăшĕ пĕлтернĕ. Паллах, кун пекки следовательсен тимлĕхĕсĕр юлмасть. Вĕрентекен хăтланăвĕн тата пулса иртнин сăлтавĕсене хальхи вăхăтра тĕпчеççĕ вĕсем. Çаплах шкул ертÿçисемпе, çак пăтăрмаха курнисемпе те курса калаçĕç. Ун хыççăн тин тивĕçлĕ йышăну тăвĕç.

ХИР СЫСНИСЕНЕ ПУЛА

Октябрĕн 20-мĕшĕнче М7 трассăн Пушкăртстанри Дюртли ялĕ çывăхĕнчи участокĕ çине кĕтмен çĕртен хир сыснисем сиксе тухнă. Ĕпхÿ – Хусан маршрутпа пыракан автобус вĕсене таптас мар тесе çул айккине чăмнă. Хальлĕхе паллă пулнă тăрăх, висĕ çын аманнă.

АН ТАРĂХТАР

Хĕрарăма тарăхтарма хушманни пуш сăмах та мар иккен. Кăна октябрĕн 20-мĕшĕнче касхине тăхăр сехетсен тĕлĕнче Нурлат районĕнчи 50-ри пĕр арçын хăй çинче туйнă. Киле ÿсĕрле килсен арăмĕпе харкашса кайнă вăл. Хĕрарăм, ахăртнех тарăхнипе, хирĕç турилккепе тытса янă та кусĕнченех лектернĕ. Сылтăм куçĕ шăтнă арçынна больницăнах леçме тивнĕ. Арăмне вара – полицие. Çак факт енĕпе уголовнăй ĕç пуçарнă, хальхи вăхăтра инкекĕн сăлтавĕсене тĕпчеççĕ.

БАЛЛОН ШАПЛАТНĂ

Октябрĕн 16-мĕшĕнче 67-ри Азнакай арçыннин пурнăçĕ сасартăк татăлнă. Паллă мар газ тултарнă баллон ванчăкĕ ăна вилмеллех амантнă. Инкек усламçă сутмалăх кÿнĕ кислород баллонĕсене хуракан хирĕçри гаражра пулнă иккен. Вăл шаплатнă чухне çывăхри хайхи арçынна ванчăкĕсем лекнĕ те. Шел, больницăна васкаса çитерсен те, çăлса хăварайман.

РФ Следстви комитечĕн Тутарстанри управленийĕн тата ТР ШĔМĕн материалĕсемпе усă курса **Ирина КУЗЬМИНА** хатĕрленĕ.

Эрнелĕх
28.10 – 03.11

ТАКА 21.III – 20.IV
Ку эрнере пуçланă ĕçсене пурне те вĕçлеме тăрăшăр. Кайран ун валли вăхăт тупăнмĕ. Ĕçре хăвăра ирĕклĕ туяс килĕ, çапах хушнине чăтăмлăн пурнăçлама тăрăшăр. Юратнă çын кĕтмен çĕртен парне тăвĕ, хăвăр та парăмра ан юлăр. Çак тапхăрта иммунитет вăйланать.

ВĂКĂР 21.IV – 20.V
Çак эрнери паллашусем питĕ интереслĕ те усăллă пулĕç. Килте ан ларăр, культура мероприятийĕсене çÿреме тăрăшăр. Ĕçтешсемпе тавлашусем сиксе тухма пултарассă. Нейтраллă пулсан кăна унран хăтăлса юлма пултаратăр. Ку вăхăтра туй тума, венчете тăма, çулçÿреве кайма ăнăçлă.

ЙĔКĔРЕШСЕМ 21.V – 21.VI
Шанса тăнă çын кĕтмен çĕртен хăй йышăнăвне улăштарса пулăшмасса пултарать. Çавăнпа маларах хатĕрленсе хурăр, запасра мĕн те пулин пултăрах. Эмоцисем хĕрсе çитеççĕ. Тăванăрсемпе çывăх çынсем çине çилĕ ан кăларăр. Мĕнпур вăй-хала ĕç çине ярăр.

РАК 22.VI – 22.VII
Ку вăхăтра мĕнле те пулин авантюрăна хутшăнас килĕ. Анчах çăлтăрсем асăрханулла пулма сĕнеççĕ. Çак кунсем чăкăлтăшлă ĕçсем тума, романтикăлла тĕлпулусене çÿреме аван. Сахалрах çини организма тасатма пулăшĕ. Диета тытма меллĕ вăхăт.

АРĂСЛАН 23.VII – 23.VIII
Ку эрнере тĕп вырăнта юрату. Романтикăлла тĕлпулусене çÿрĕр. Хăвăра пăхăр, сывлăха çирĕплетекен процедурăсем усăллă пулĕç. Профессире çитĕнÿ туни финанс лару-тăрăвне лайăхлатма пулăшĕ. Студентсемшĕн вĕренме ăнăçлă тапхăр.

ХĔР 24.VIII – 23. IX
Çăлтăрсем ку эрнере хăвăра кăна шанма сĕнеççĕ, çумри çынсенчен усси пулмĕ. Çак тапхăрта пысăк проектсене ан пуçăнăр, пурпĕрех пурнăçланмĕç. Кану вара ĕмĕр асра юлмалли пулĕ, çавăнпа чăматана пуçтармалла та курорта е ытти çĕре вĕçтермелле.

ТАРАСА 24.IX – 23.X
Ку эрнере кĕтмен парне илетĕр. Ĕç енĕпе ыйтусем хуравсенчен ытларах. Эрне варринелле тимлĕх чакать, çавăнпа пысăк та пĕлтерĕшлĕ ĕçсене çитес вăхăта хăварăр. Унсăрăн нумай йăнăшсем туса пĕтеретĕр, пуçлăха ку килĕшмĕ. Укçа-тенкĕ енчен улшăнусемсĕр.

СКОРПИОН 24.X – 22.XI
Тахçантанпа канăç паман ыйтăва тинех ăнăçлă татса паратăр. Ĕçре аван сыпăнса пырать. Юратура вара ăмăр çанталăк, хирĕçтăрусем пулĕç, хăш-пĕрисем уйрăлма та шутлĕç. Ытларах канмалла, сахалрах ĕç çинчен шутламалла.

УХĂÇĂ 23.XI – 21.XII
Çывăх çынсем паракан канашсене тимлĕхе илĕр. Эрне пуçламăшĕнче асăрханулларах пулăр, сире ултала пултарассă. Укçа-тенкĕ проблемисене пит çывăха ан илĕр, кĕçех йăлт йĕркене кĕрĕ. Перекетлĕрех пулăр.



ТУ КАЧАКИ 22.XII – 20.I
Эрне тăршшĕпех наянлăх хыçран çÿрĕ. Çавна пула килте те, ĕçре те тавлашусем сиксе тухма пултараççĕ. Инçе çулçÿревсене çитес вăхăта хăварăр, ыраттарас, аманас хăрушлăх пур. Епле те пулин обществăлла организацие кĕресси пирки шутласа пăхăр.

ШЫВТĂКАН 21.I – 20.II
Харпăр анализ тума питĕ лайăх тапхăр. Пурнăç пирки хăвăрăн шухăшăрсене тепĕр хут пăхса тухăр. Тахçан çиллентернĕ çынсенчен каçару ыйтма вăхăт çитнĕ. Мĕн-тĕр кирлине манма пултаратăр, çавăнпа йăлт çырса пырăр. Сывлăхăра тимлĕхре тытăр, çăмăлттайланса ан çÿрĕр.

ПУЛĂСЕМ 21.II – 20.III
Укçа-тенкĕпе хутшăнусем çĕнĕ шая тухаççĕ. Лайăх условисемпе мĕнтĕр кирлине туянма, укçа пухма, кредит парăмĕсене хупма пултаратăр. Тăвансемпе тавлашусем сиксе тухма пултараççĕ. Пĕрремĕш килĕштерме тăрăшăр. Ку малтанхи туслăха таварма пулăшĕ.

ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕВИДЕНИЙĔ

Тунтикун, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ
05.00 «Asамат». Концерт (16+)
07.00, 08.00 «Ир пулсан» (6+)
09.00 Проект ПФО «Театральное Приволжье». «Гадкий утенок» (Саратовская область) (12+)
10.10, 22.30 «Жизнь в движении» (12+)
10.30 «Круглый стол» (12+)
11.00 «Жанна, пожени!» (16+)
12.00 «Мужчина во мне». Многосерийный фильм (16+)
13.00, 15.00, 19.00, 0.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
13.05 «След в истории» (12+)
13.30 «Законодатели» (12+)
14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
14.05, 4.30 «Мультимир» (6+)
14.30 «КВН. За кадром» (12+)
15.05, 2.30 «Фронтовые истории любимых актеров». Документальный фильм (16+)
16.05 «ОтдыХАЙП» (12+)
17.00, 3.30 «Все сокровища мира». Многосерийный фильм (12+)
18.00 «На пару дней» (16+)
18.30, 2.00 «Республика в деталях» (6+)
19.30, 23.30 «Ылтăн çÿпçерен» (12+)
20.30 «Кухня народов Крыма» (12+)
21.00 Проект ПФО «Театральное Приволжье». «Сказка о военной тайне» (Ульяновская область) (12+)
21.30 «Самана» (12+)
00.30 «Старшая жена». Золотой фонд «Мосфильм» (12+)

Ытларикун, юпа уйăхĕн 29-мĕшĕ
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 0.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Ылтăн çÿпçерен» (12+)
06.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30, 13.05 «Кухня народов Крыма» (12+)
07.00, 08.00 «Ир пулсан» (6+)
09.00, 13.30, 18.30, 2.00 «Республика в деталях» (6+)
09.30 Проект ПФО «Театральное Приволжье». «Сказка о военной тайне» (Ульяновская область) (12+)
10.00 «Самана» (12+)
11.00 «Жанна, пожени!» (16+)
12.00 «Мужчина во мне». Многосерийный фильм (16+)
14.05 «ОтдыХАЙП» (12+)
15.05, 2.30 «Фронтовые истории любимых актеров». Документальный фильм (16+)
16.05 «Маша и медведь» (6+)
16.30 «Легенды мирового кино. Михаил Пуговкин» (12+)
17.00, 3.30 «Все сокровища мира». Многосерийный фильм (12+)
18.00 «На пару дней» (16+)
19.30, 23.30 «След в истории» (12+)
20.30 «Цифровой код» (12+)
20.45 «Законодатели» (12+)
21.00 «Тĕп урампа оркестрпа». Чăвашла куçарнă фильм (12+)
00.30 «Старики-разбойники». Золотой фонд «Мосфильм» (12+)
04.30 «Мультимир» (6+)

Юнкун, юпа уйăхĕн 30-мĕшĕ
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 0.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30, 13.05 «След в истории» (12+)
06.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30, 14.30 «Цифровой код» (12+)
06.45 «Законодатели» (12+)
07.00, 08.00 «Ир пулсан» (6+)
09.00, 13.30, 18.30, 2.00 «Республика в деталях» (12+)
09.15 «Тĕп урампа оркестрпа». Чăвашла куçарнă фильм (12+)
11.00 «Жанна, пожени!» (16+)
12.00 «Мужчина во мне». Многосерийный фильм (16+)
14.05, 16.05 «Маша и медведь» (6+)
15.05, 2.30 «Фронтовые истории любимых актеров». Документальный фильм (16+)
16.30 «Гении и злодеи. Макс Планк» (12+)
17.00, 3.30 «Лучший друг семьи». Многосерийный фильм (16+)
18.00 «На пару дней» (16+)
19.15, 23.15 «Вăй патăр!» (12+)
19.30, 23.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
20.30 «Круглый стол» (12+)
21.00 «Пирĕн пурнăç хăтлăхра». Драма (12+)
00.30 «Судьба человека». Золотой фонд «Мосфильм» (12+)
04.30 «Мультимир» (6+)

Кĕçнерникун, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 0.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.15, 13.05 «Вăй патăр!» (12+)
05.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
06.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30 «Круглый стол» (12+)
06.40, 14.05, 4.30 «Мультимир» (6+)
07.00, 08.00 «Ир пулсан» (6+)
09.00, 13.30 «Республика в деталях» (12+)
09.15 «Пирĕн пурнăç хăтлăхра». Драма (12+)
11.00 «Жанна, пожени!» (16+)
12.00 «Мужчина во мне». Многосерийный фильм (16+)
14.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
15.05, 2.30 «Фронтовые истории любимых актеров». Документальный фильм (16+)
16.05 «Маша и медведь» (6+)
16.30 «Легенды мирового кино. Грегори Пек» (12+)
17.00, 3.30 «Лучший друг семьи». Многосерийный фильм (16+)
18.00, 2.00 «На пару дней» (16+)
18.30 «Кухня народов Крыма» (12+)
19.30, 23.30 «Ылтăн çÿпçерен» (12+)
20.30 «Жизнь в движении» (12+)
21.00 «Юрăсен юрри». Концерт (6+)
00.30 «Формула любви». Золотой фонд «Мосфильм» (12+)

Эрнекун, чÿк уйăхĕн 1-мĕшĕ
05.00, 13.00, 15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30, 13.30, 23.30 «Ылтăн çÿпçерен» (12+)
06.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30 «Жизнь в движении» (12+)
07.00, 08.00 «Ир пулсан» (6+)
09.00 «Юрăсен юрри». Концерт (6+)
11.00 «Жанна, пожени!» (16+)
12.00 «Мужчина во мне». Многосерийный фильм (16+)
13.05, 4.30 «Мультимир» (6+)
14.05 «ОтдыХАЙП» (12+)
15.05 «Четвертое измерение» (12+)
16.05 «Пряничный домик. Кижи. Деревянная сказка» (12+)
16.30, 1.00 «Лучший друг семьи». Многосерийный фильм (16+)
18.30 «Республика в деталях» (12+)
19.00, 0.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
20.30 «Качество» (12+)
21.00 «Савăнатпăр чăвашла». Халăх ташшисен «Сувар» ансамблĕн концерчĕ (6+)

Шăматкун, чÿк уйăхĕн 2-мĕшĕ
05.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
06.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30 «Савăнатпăр чăвашла». Халăх ташшисен «Сувар» ансамблĕн концерчĕ (6+)
08.30 «Çерем çинчи çиçĕм». Трагикомедия (16+)
10.30 «Кочующий фронт». Классика СССР (12+)
12.30, 22.00 «Цифровой код» (12+)
13.00, 1.00 «Криминальная полиция». Многосерийный фильм (16+)
15.00 «Маша и медведь» (6+)
15.30, 2.30 «Нумай та пĕтет, сахал та çитет». Августа Уляндинăн пултарулăх каçĕ (12+)
18.00 «Самана» (12+)
19.00, 23.00 «Ырă кăмăлпа» (12+)
19.30 «Русская опера». Гала-концерт открытия 60-го сезона Чувашского государственного театра оперы и балета (12+)
22.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
23.30 «След в истории» (12+)

Вырсарникун, чÿк уйăхĕн 3-мĕшĕ
05.00 «Русская опера». Гала-концерт открытия 60-го сезона Чувашского государственного театра оперы и балета (12+)
07.30 «Цифровой код» (12+)
08.00 «Круглый стол» (12+)
08.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
09.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
10.00 «Ырă кăмăлпа» (12+)
10.30, 0.00 «Против течения». Классика СССР (12+)
12.00 «Законодатели» (12+)
12.30 «Жизнь в движении» (12+)
13.00, 1.30 «Криминальная полиция». Многосерийный фильм (16+)
15.00 «Рия». Илемлĕ фильм (16+)
17.00 «Маша и медведь» (6+)
17.30 «Виктор Петров култарать, 60 çул та тултарать!» Юбилей концерчĕ (16+)
21.00 «Укăлча умĕнче». Раисăпа Николай Андреевсен пултарулăх каçĕ (12+)
04.30 «Мультимир» (6+)

ТЕЛЕКАНАЛСЕН ПРОГРАММИ

ПОНЕДЕЛЬНИК

28 ОКТЯБРЯ

1-й КАНАЛ

05.00, 09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00, 03.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,17.00, 18.00 Новости (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00, 01.00,03.05 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.35 «На самом деле» (16+)
19.45 «Пусть говорят» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 «МОСГАЗ. «ОПЕРАЦИЯ «САТАНА» (16+)
23.25 «Вечерний Ургант» (16+)
00.00 «Познер» (16+)

РОССИЯ 1

05.00,09.25 Утро России (16+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (16+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (16+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?». Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Т/с «ЕКАТЕРИНА. САМОЗВАНЦЫ» (12+)
23.15 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» (12+)
02.00 Т/с «СЛЕДОВАТЕЛЬ ТИХОНОВ» (12+)
03.55 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДЕТЕКТИВ» (12+)

ТНВ

05.00 «Жырлыйк эле!» (6+)
05.50,07.00,18.30 Татарстан хэбэрлэре (12+)
06.00,02.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,21.30 Новости Татарстана (12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00 Т/с «КЛЮЧ К ЕГО СЕРДЦУ» (12+)
10.00 Т/с «СОНГЫ ЯРАТУ» (12+)
10.55 «Канун. Парламент.Жэмгыять» (12+)
11.30 «Татарлар» (12+)
12.00, 22.40 Т/с ««ТОН ПАТШАБИКЭСЕ» (16+)
13.00 «Семь дней» (12+)
14.00 «Закон. Парламент. Общество» (12+)
14.45 «Белем деньясы» (0+)
15.00 «Мой формат» (12+)
15.15 «Рыцари вечности» (12+)
15.30 М/с «Алга, Диего! Алга!» (0+)
17.00 Спектакль «СКАЗКА О ВОЕННОЙ ТАЙНЕ». «БАЛАГАН» (6+)
17.30 Д/ф «Яшел маршрут» (12+)
18.00,01.30 «Таяну ноктасы» (16+)
19.00 Хоккей. Чемпионат КХЛ. «Ак Барс» (Казань) - «Амур» (Хабаровск) (6+)
22.00 «Вызов 112» (16+)
22.10 «Реальная экономика» (12+)
23.30 «Видеоспорт» (12+)
00.00 Х/ф «СОЛЯРИС» (12+)
03.40 «Жырлыйк эле!-2010» (6+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30, 13.30, 15.30, 19.30 Главные новости (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
09.30, 14.30 Татарский с Дмитрием Петровым (16+)
11.30 Магия природы (16+)
12.30 Вне зоны (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)
18.30, 22.30 Хроника происшествий (16+)
18.45, 22.45 Око прокурора (16+)

ВТОРНИК

29 ОКТЯБРЯ

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00,03.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00, 18.00 (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00,01.00,03.05 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.35 «На самом деле» (16+)
19.45 «Пусть говорят» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 «МОСГАЗ. «ОПЕРАЦИЯ «САТАНА» (16+)
23.25 «Вечерний Ургант» (16+)
23.55 Премьера. «Право на справедливость» (16+)

РОССИЯ 1

05.00,09.25 Утро России (16+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (16+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (16+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?». Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Т/с «ЕКАТЕРИНА. САМОЗВАНЦЫ» (12+)
23.10 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» (12+)
02.00 Т/с «СЛЕДОВАТЕЛЬ ТИХОНОВ» (12+)
03.55 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДЕТЕКТИВ» (12+)

ТНВ

05.00 «Йерэктэн - йерэккэ». Энвэр Гобэйдуллин (6+)
05.50 ,07.00 Татарстан хэбэрлэре (12+)
06.00,02.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,19.30,21.30 Новости Татарстана (12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00 Т/с «КЛЮЧ К ЕГО СЕРДЦУ» (12+)
10.00 Т/с «СОЦГЫ ЯРАТУ» (12+)
10.55 «Туган жир» (12+)
11.30 «Татарлар» (12+)
12.00, 23.00 Т/с ««ТОН ПАТШАБИКЕСЕ» (16+)
13.00 Д/ф «Сирэгэйгэн ризыклар»(12+)
13.30 Д/ф «Сэяхэтлэр тэме» (12+)
14.00 «Путь» (12+)
14.15 «Не от мира сего...» (12+)
14.45 «Дорога без опасности» (12+)
15.00 «Мой формат» (12+)
15.15 М/с «Алга, Диего! Алга!» (0+)
16.15 Спектакль «МОЙ ДЕДУШКА БЫЛ ВИШНЕЙ». «АБРИКОСОВЫЙ САД» (12+)
18.00 «Мин» (12+)
18.30,20.30 Татарстан хэбэрлэре (12+)
19.00 «Таян уноктасы» (16+)
20.00, 22.00 «Вызов 112» (16+)
20.15 «Белем дэньясы» (0+)
21.00 «Прямая связь» (12+)
22.10 Т/С «РЭХЭТ ЯШИБЕЗ»(12+)
23.45 «Видеоспорт» (12+)
00.15 Х/ф«СОЛЯРИС» (12+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30, 13.30, 15.30, 19.30 Главные новости (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
09.30, 14.30 Татарский с Дмитрием Петровым (16+)
11.30 Магия природы (16+)
12.30 Вне зоны (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)
18.30, 22.30 Великие сражения: кровь и сталь (16+)

СРЕДА

30 ОКТЯБРЯ

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00,03.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00, 18.00 Новости (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00,00.00,03.05 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.35 «На самом деле» (16+)
19.45 «Пусть говорят» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 «МОСГАЗ. «ОПЕРАЦИЯ «САТАНА» (16+)
23.25 «Вечерний Ургант» (16+)
00.00 Подлинная история русской революции (12+)

РОССИЯ1

05.00,09.25 Утро России (16+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (16+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (16+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?». Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Т/с «ЕКАТЕРИНА. САМОЗВАНЦЫ» (12+)
23.10 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» (12+)
02.00 Т/с «СЛЕДОВАТЕЛЬ ТИХОНОВ» (12+)
03.50 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДЕТЕКТИВ» (12+)

ТНВ

05.00 «Кэмит Жэвит»(16+)
05.50,07.00,18.30 Татарстан хэбэрларе (12+)
06.00,02.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,19.00 Новости Татарстана (12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00, 22.10 Т/с «РЭХЭТ ЯШИБЕЗ» (12+)
10.00 Т/с «СОНГЫ ЯРАТУ» (12+)
10.55,04.30 «Оныта алмыйм...». Ретро-концерт (0+)
11.30 «Татарлар» (12+)
12.00, 22.40 Т/с ««ТОН ПАТШАБИКЭСЕ» (16+)
13.00 «Каравай» (6+)
13.30 Д/ф «Увлечённые люди» (12+)
14.00 «Секреты татарской кухни» (12+)
14.45 «Эдэби хэзинэ» (12+)
15.15 М/с «Алга, Диего! Алга!» (0+)
15.45 Спектакль «ВОЛШЕБНЫЙ СУНДУК». «РАДУГА» (6+)
17.00 Н/ф«АК ЧЭЧЭКЛЭР» (12+)
18.00,01.30 «Таяну ноктасы» (16+)
19.30 Хоккей. Чемпионат КХЛ. «Ак Барс» - «Адмирал» (Владивосток (6+)
22.00 «Вызов 112» (16+)
23.30 «Автомобиль» (12+)
00.00 Х/ф «ЧАСТНЫЙ ДЕТЕКТИВ, ИЛИ ОПЕРАЦИЯ «КООПЕРАЦИЯ» (12+)
03.40 «Жырлыйк эле!-2010» (6+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30, 13.30, 15.30, 19.30 Главные новости (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
09.30, 14.30 Фильм о проекте Татарский с Дмитрием Петровым (16+)
11.30 Магия природы (16+)
12.30, 18.30, 22.30 Чистый Татарстан (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)

ЧЕТВЕРГ

31 ОКТЯБРЯ

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00,03.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00, 18.00 Новости (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00,00.00,03.05 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.35, 03.40 «На самом деле» (16+)
19.45 «Пусть говорят» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 «МОСГАЗ. «ОПЕРАЦИЯ «САТАНА» (16+)
23.25 «Вечерний Ургант» (16+)
00.00 Подлинная история русской революции (12+)

РОССИЯ 1

05.00,09.25 Утро России (16+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (16+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (16+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?». Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Т/с «ЕКАТЕРИНА. САМОЗВАНЦЫ» (12+)
23.15 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» (12+)
02.00 Т/с «СЛЕДОВАТЕЛЬ ТИХОНОВ» (12+)
03.55 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДЕТЕКТИВ» (12+)

НТВ

05.00 «Башваткыч» (6+)
05.50,07.00, 18.30, 20.30 Татарстан хэбэрлэре (12+)
06.00,02.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,21.30 Новости Татарстана (12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00 Т/с «РЭХЭТ ЯШИБЕЗ» (16+)
09.30 «Тарихлы шэһэрлэр буенча сэяхэт» (12+)
10.00 Т/с «СОНГЫ ЯРАТУ» (12+)
10.55 «Ватандашлар» (12+)
11.30«Татарлар» (12+)
12.00, 23.30 Т/с «ТОН ПАТШАБИКЭСЕ» (16+)
13.00 Д/ф «Дайвинг очен доньядагы ин яхшы урыннар» (12+)
14.00 «Каравай» (6+)
14.45 «Белем доньясы» (0+)
15.00 «Бергэлэп ойрэник. Баттл» (0+)
15.15 М/с «Алга, Диего! Алга!» (0+)
17.00 Н/ф «АК ЧЭЧЭКЛЭР» (12+)
18.00 «Юлчы» (12+)
19.00 «Таяну ноктасы» (16+)
20.00, 22.00 «Вызов 112» (16+)
20.15 «Кучтенеч» (12+)
21.00 Док. фильм (12+)
23.30 Х/ф «СТАРИКИ РАЗБОЙНИКИ» (12+)
03.40 «Жырлыйк эле!-2010» (6+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30 Главные новости (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
09.30, 12.30 Вне зоны (16+)
11.30, 14.30 Магия природы (16+)
13.30, 15.30, 19.30 Жилищно-коммунальные Советы (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Наши налоги (16+)
18.30, 22.30 Великие сражения: кровь и сталь (16+)

ПЯТНИЦА

1 НОЯБРЯ

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (16+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00, 18.00 Новости (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.35 «Человек и закон» (16+)
19.45 «Поле чудес» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 «Голос». Новый сезон (12+)
23.30 «Вечерний Ургант» (16+)
00.25 «Горячий лед». Гран-при 2019 (16+)
03.25 «Про любовь» (16+)
02.25 «На самом деле» (16+)
04.10 «Наедине со всеми» (16+)

РОССИЯ1

05.00,09.25 Утро России (16+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (16+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (16+)
11.45, 03.55 Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?». Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Премьера. «Юморина» (16+)
23.45 «Сто причин для смеха». Семен Альтов (12+)
00.15 Х/ф «ДЕРЕВЕНЩИНА» (12+)

ТНВ

05.00 «Халкым минем...» (12+)
05.25,10.55 «Нэсыйхэт» (6+)
05.50 00,07.00.00 Татарстан хэбэрлэре (12+)
06.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,19.30,21.30 Новости Татарстана (12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00, 22.10 Т/с «РЭХЭТ ЯШИБЕЗ»(12+)
09.30 Д/ф «Тарихлы шэһэрлэр Буенча сэяхэт» (12+)
10.00 Т/с «СОНГЫ ЯРАТУ» (12+)
11.30 «Татарлар» (12+)
12.00, 22.40 Т/С «ТОН ПАТШАБИКЭСЕ» (16+)
13.00 «Башваткыч» (6+)
14.00 «Актуальный ислам» (6+)
14.15 «Я обнимаю глобус...» (12+)
14.45 «Здоровая семья: мама, папа и я» (6+)
15.00 «Бергэлэп ейрэник. Батгл» (0+)
15.15 «Полосатая зебра» (0+)
15.30 Т/с «ИСЧЕЗНУВШИЕ» (12+)
17.00 Н/ф«АК ЧЭЧЭКЛЭР»(12+)
18.00 «Туган жир» (12+)
18.30,20.30 Татарстан хэбэрлэре (12+)
19.00 Д/ф «Числа. Пять чисел, которые изменили мир» (6+)
20.00,22.00 «Вызов 112» (16+)
20.15 «Белем деньясы» (0+)
21.00 «Адэм белэн һава» (6+)
23.30 «Сэхнедэш» (12+)
00.25 Х/ф «ГЕНРИ ПУЛ УЖЕ ЗДЕСЬ» (16+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30 Жилищно-коммунальные Советы (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
09.30, 12.30 Самые опасные путешествия (16+)
11.30, 14.30 Удивительный Мир (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)
18.30, 22.30 Великие сражения: кровь и сталь (16+)

СУББОТА

2 НОЯБРЯ

1-й КАНАЛ

06.00 Новости (16+)
06.10 Т/с «КУПРИН. ПОЕДИНОК» (16+)
08.10 «Играй, гармонь любимая!» (12+)
08.55 Умницы и умники (12+)
09.45 «Слово пастыря» (0+)
10.00,12.00 Новости (с субтитрами) (16+)
10.15 «Игорь Тальков. «Память непрошенным гостем...» (12+)
11.15 «Теория заговора» (16+)
12.15 «Любовь Успенская. Почти любовь, почти падение» (12+)
17.25 «Кто хочет стать миллионером?» (16+)
19.00 «Сегодня вечером» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.20 «Горячий лед». Гренобль. Алина Загитова, Алена Косторная. Фигурное катание.Гран-при 2019 г. Женщины. Произвольная программа (16+)
23.00 Что? Где? Когда? (16+)
00.10 Х/ф «ПОЧЕМУ ОН?» (18+)
02.15 «На самом деле» (16+)

РОССИЯ1

05.00 «Утро России. Суббота» (16+)
08.15 «По секрету всему свету» (16+)
08.40 Местное время. Суббота (12+)
09.20 «Пятеро на одного» (12+)
10.10 «Сто к одному». Телеигра (16+)
11.00 Вести (16+)
11.20 Вести. Местное время (16+)
11.40 Премьера. «Юмор! Юмор! Юмор!» (16+)
13.50 Х/ф «ПЕРЕКРЕСТОК» (12+)
18.00 «Привет, Андрей!». Вечернее шоу Андрея Малахова (12+)
20.00 Вести в субботу (16+)
21.00 Х/ф «ИСКУШЕНИЕ НАСЛЕДСТВОМ» (12+)
01.00 Х/ф «СИЛА ВЕРЫ» (12+)

ТНВ

05.00 Концерт (6+)
07.00 «Sина Миннэн Sэлам» (6+)
09.00 «Бергалэп ойрэник. Баттл» (0+)
09.15 Мультфильмы (0+)
09.30 «Адэм белэн һава» (6+)
10.00 «Кайнар хит» (12+)
11.00 «Азбука долголетия» (6+)
11.15 «ДК» (12+)
11.30 «Секреты татарской кухни» (12+)
12.00 «Каравай» (6+)
12.30 «Видеоспорт» (12+)
13.00 «Канун. Парламент. Жэмгыять» (12+)
13.30 «Йорэктэн - йорэккэ» (12+)
14.30 «Эдэби хэзинэ» (6+)
15.00 «Мин» (12+)
15.30 «Юлчы» (6+)
16.00 Мистический мюзикл «Тайна серого замка или каникулы с приведениями». Образцовая эстрадная студия «Дорога Добра» (г. Самара) (6+)
17.00 «Халкым минем» (12+)
17.30 Хоккей. Чемпионат КХЛ. «Ак Барс» (Казань) - «Барыс» (Нур-Султан) (6+)
20.00 «Адымнар» (12+)
20.30 «Жырлыйкэле!» (6+)
21.30 Новости в субботу (12+)
22.00 «КВН РТ-2019» (12+)
23.00 Н/ф«ШОМАКУЛЛАР» («Бархатные ручки») (12+)
00.40 Н/ф «СИНА КАЙТАМ» (12+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30 Главные новости (16+)
05.30, 06.30, 07,30 Фильм о проекте Татарский с Дмитрием Петровым (16+)
08.30, 09.30, 10.30 Самые опасные путешествия (16+)
11.30, 23.30 Мобильный репортер (16+)
12.30, 17.30 Суть недели с Григорием Тинским (16+)
13.30, 22.30 Главное за неделю (16+)
14.30, 19.30 Суть дела. Итоги с Григорием Тинским (16+)
15.30, 21.30 INews за неделю (16+)
16.30, 20.30 Хроника происшествий (16+)
16.50, 20.50 Крутящий момент (16+)
18.30 Интервью без галстука (16+)

ВОСКРЕСЕНЬЕ

3 НОЯБРЯ

1-й КАНАЛ

06.00 Новости (16+)
06.10 «Россия от края до края»(12+)
06.50, 09.00 Бокс. Бой за титул чемпиона мира. Сергей Ковалев - Сауль Альварес. (12+)
07.50 «Здоровье» (16+)
10.00,12.00 Новости (с субтитрами) (16+)
10.15 «Жизнь других» (12+)
11.15,12.15 «Видели видео?» (6+)
13.55 «Страна Советов. Забытые вожди» (16+)
16.00 Премьера. «Звезды «Русского радио» (12+)
18.00 «Щас спою!» (12+)
19.15,21.20 Х/ф «СЛУЖЕБНЫЙ РОМАН» (0+)
21.00 «Время» (16+)
22.40 «Горячий лед». Гренобль. Фигурное катание. Гран-при 2019 г. Показательные выступления (16+)
00.30 Х/ф «БЫВШИЕ» (16+)
02.00 «На самом деле» (16+)

РОССИЯ 1

04.40 «Сам себе режиссёр» (12+)
05.15, 03.05 Х/ф «ЛЮБОВЬ ИЗ ПРОБИРКИ» (12+)
07.20 «Семейные каникулы» (12+)
07.30 «Смехопанорама» (16+)
08.00 Утренняя почта (12+)
08.40 Местное время. Воскресенье (12+)
09.20 «Когда все дома с Тимуром Кизяковым» (12+)
10.10 «Сто к одному». Телеигра (12+)
11.00 Вести (12+)
11.20 Большой праздничный бенефис Елена Степаненко «Свободная, красивая...» (16+)
13.45 Х/ф «КАТЬКИНО ПОЛЕ» (12+)
17.50 «ЛЮБОВЬ И ГОЛУБИ» (12+)
20.00 Вести недели (12+)
22.00 Москва. Кремль. Путин (16+)
22.40 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьёвым» (12+)
00.50 «Дежурный по стране». Михаил Жванецкий (16+)
01.50 Х/ф «СЛЕДОВАТЕЛЬ ТИХОНОВ» (12+)

ТНВ

05.00 «Йерэктэн - йерэккэ» (6+)
06.00 Концерт (6+)
08.00,13.00 «Адымнар» (12+)
08.30 «Игры сильнейших» (6+)
09.00 «Бергэлэп ейрзник. Баттл» (0+)
09.15 «Тамчы-шоу» (0+)
09.45 «Яшьлэр тукталышы» (12+)
10.15 «Мин» (12+)
10.45 «За гранью пьесы...» (12+)
11.00 «Автомобиль» (татар телендэ) (12+)
11.30 «Секреты татарской кухни» (12+)
12.00 «Каравай» (6+)
12.30 «Закон. Парламент. Общество» (12+)
13.30 «Наше время – Безнен заман» (6+)
14.30 «Видеоспорт» (12+)
15.00,00.35 «Ком сэгате» (12+)
16.00 «Эйдэ Шая РТ» лигасы. Зур фестиваль (12+)
17.00 «Наша республика. Наше дело». Ток-шоу (12+)
18.00 «Башваткыч» (6+)
19.00,22.00 «Семь дней» (12+)
20.00 100 лет ТАССР. «Вехи истории» (12+)
20.30 «Болгар радиосы» концерты (6+)
21.00 «Эй, язмыш,язмыш...»(12+)
23.00 «КОТЕЛМЭГЭН ШАУ-ШУ» («Как снег на голову») (12+)
01.25 «Татар халык жырлары» (0+)
02.00 «Манзара» (6+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30, 14.30, 21.30 Главное за неделю (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 9.30 Великие сражения: кровь и сталь (16+)
10.30 Око прокурора (16+)
10.45, 15.30, 20.30 Хроника происшествий (16+)
11.30, 13.30, 17.30 INews за неделю (16+)
12.30, 19.30 Мобильный репортер за неделю (16+)
13.30 Интервью без галстука (16+)
15.50, 20.50 Крутящий момент (16+)
16.30, 22.30 Суть недели с Григорием Тинским (16+)
18.30, 23.30 Суть дела. Итоги с Григорием Тинским (16+)

верук тĕпелĕ

СУХАНПА СЫР КУКĂЛĔ

Чуста хатĕрлемелле: морозильнике хурса кăшт шăнтнă маргарина теркăпа хырмалла, хăйма, майонез, апат соди тата çăнăх хушса чуста çăрмалла. Полиэтилен пакета хурса пĕрер сехете холодильнике хумалла. Ăшлăх хатĕрлемелле: Сухана çурма ункăн турамалла та ăшаласа илмелле. Сыра теркăпа хырмалла, çăмарта, сухан тата специсем хушса пăтраштармалла. Чустана икĕ пĕр пек мар пая пайламалла. Пысăккраххине йĕтĕрлесе форма çине хумалла, ун çине – ăшлăх. Юлнă чустаран пăрăмсем (жгут) туса кукăль çийĕн решетке кармалла. Кукăле духовкăра хатĕр пуличчен пĕçермелле.

Чуста валли 200 г çăнăх, 180 г маргарин, ½ чей кашăкĕ апат соди, 2 кашăк хăйма, 2 кашăк майонез; ăшлăх валли 2-3 шăратнă (плавленый) сыр, 3-4 çăмарта, 2 пуç сухан, тип çу, тăвар, специсем кирлĕ.

ЧĂЛМЕКРИ КУПĂСТА ЯШКИ

Ăшпа çĕрулмие, кишĕре, сухана, купăстана, пăрăça турамалла. Хатĕр ингредиентсене чăлмексене тултармалла. Тăвар тата пăрăç, лавр çулçи, вĕри шыв хушмалла та хупласа духовкăра 1,5-2 сехет пĕçермелле. Туранă укроп сапса çимелле.

400 г сысна ашĕ, 300 г çĕрулми, 1 кишĕр, 1 пуç сухан, 1 пылак пăрăç, 300 г купăста, укроп, пăрăç тата тăвар кирлĕ.

хусанта – чăваш патшалăх филармонийĕ

А.Наумов сăнÿкерчĕкĕсем.

Саламлатпăр!

*Хаклăран та хаклă аттепе аннене, Чистай районĕнчи Ишельел ялĕнче пурăнакан **Николай Петровичпа Мария Николаевна НИКОЛАЕВСЕНЕ** пĕрлешнĕренпе 45 çул çитнĕ ятпа – сапфир туйĕпе, аттене 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Утас çулăр такăр пултăр, пурнăçри кашни самант савăнăçпа тултăр, сĕтелĕр çăкăр-тăвартан, кĕрекĕр сывăх çыннăрсенчен ан татăлтăр. Чирлемесĕр 100 çултан иртиччен сывлăхпа пурăнмалла пултăр. Ĕмĕтĕрсем пурнăçлансах пычăр.*

Нихăçан вăй-хал ан чактăр,
Пулăр сывлăхлă ялан.
Эпир ăшшăн саламлатпăр
Ыр сунса сире чунтан.

Ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕ, мăнукĕсем.

• • • • • • • • • • • • • • • • • • • •

*Лайăш районĕнчи Габишевăра пурăнакан **Михаил Андреевичпа Вера Степановна БЕЛОВСЕМ** пĕрлешсе çемье çавăрнăранпа çур ĕмĕр çитрĕ. Ытарайми тăванăмăрсене ылтăн туй ячĕпе ăшшăн саламлатпăр! Эсир пуриншĕн те çемье çирĕплĕхĕн, килĕшÿллĕ пурнăçăн тĕслĕхĕ. Малашне те пĕр-пĕрине шăкăл-шăкăл каласса, юратса нумай-нумай çул пурăнмалла пултăр. Çурхи хĕвел пек çутă телей, çăлкуç шывĕ пек таса тăракан вăй-хавалпа хавхалану, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр.*

50 çул эсир пĕрле,
Ылтăн туй, шавла, кĕрле.
Чыс сире тата мухтав,
Савăнма ан манăр шав.

Пĕртăванĕсемпе вĕсен çемйисем.

кăштах кулăш

Чăнкă Мирунпа арăмĕ апата ларнă. Арăмĕ пĕр кашăк сыпса илет те куçĕнчен çутă тумламсем юхса анаççĕ. Яшки сыпма çук тăварлă иккен.

– Мĕншĕн макăратăн? – ыйтать Мирун.

– Анне çакăн пек яшкана питĕ юрататчĕ, ăна аса илтĕм те йĕрсе ятăм, – хуравлать хĕрарăм.

Мирун та яшкана сыпса пăхать, унăн та куççулĕсем юхса анаççĕ.

– Эсĕ мĕншĕн йĕретĕн тата? – ыйтать арăмĕ.

– Эпĕ те санăн леш тĕнчене ăсаннă, мана çакăн пек ним тума пĕлмен хĕрне тыттарса хăварнă аннÿне аса илтĕм çав, – тесе хуçĕ тет Мирун.

* * *

Ахманейĕн арăмĕ питĕ чăкăлтăш, усалскер пулнă. Вăл вăрçăшнинчен хăтăлас тесе пĕррехинче пуян кÿрши патне пырса ÿпкевлĕн:

– Эх, мĕншĕн авлантăм-ши тулĕк? Лăпкăн пурăнаттăмччĕ, нуша курмастăм, инкек çеç вĕт ку хĕрарăм, – тет.

– Арăм, паллах, ырă япала шутне кĕмест. Инкек вăл, килĕшетĕп санпа. Анчах питĕ кирлĕ инкек, – хуравлать Кукша.

Евгений ТУРХАН хатĕрленĕ.

Учредитель: АО «ТАТМЕДИА» **сăвар – чăвашсен сĕм авалхи ячĕ** **www.suvargazeta.ru** **Тел. рекламной службы: 89178973890**

«СУВАР»
республиканская газета на чувашском языке
И.о. руководителя – главного редактора филиала АО «ТАТМЕДИА» И.Ф. Трифонова
Тел.: 222-09-84 (16 04)

Адрес редакции: Республика Татарстан, г.Казань, ул. Декабристов, д. 2.
Для писем: 420066, г.Казань, а/я 64
E-mail: suvar@mail.ru
Тел: (843) 222-09-84 (17 98) журналисты (843) 222-05-44, 518-33-75 приемная
Издатель: АО «ТАТМЕДИА» 420066, г. Казань, ул. Декабристов, 2

QR код для смартфона

Газета зарегистрирована 23 марта 2011 года в Поволжском управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия.
Свидетельство о регистрации ПИ № ФС7744361
Номер отпечатан в типографии филиала АО «ТАТМЕДИА» ПИК «Идел-Пресс» г.Казань, ул. Декабристов, д.2

Создано при поддержке Республиканского агентства по печати и массовым коммуникациям РТ

Тираж 1973 экз.

Дежурный по номеру Ирина Кузьмина

Мнение редакции не всегда совпадает с мнением авторов. Редакция не распологает возможностью выступать ходатаем в официальных организациях. Рукописи не рецензируются и не возвращаются. За достоверность рекламных объявлений ответственность несет рекламодатель. Перепечатка материалов разрешается только с письменного согласия редакции.

Реквизиты: (сиктермесĕр çырмалла)
Филиал АО «ТАТМЕДИА» «Редакция газеты «Сувар»
Банк: ПАО «АК БАРС» БАНК г.Казань
р/сч 40702810200020010327
кор/сч 30101810000000000805
БИК 049205805 ИНН 1655144950
КПП 165802003
ОГРН 1071690057834
Стоимость поздравления до 600 знаков (с пробелами) – 600 рублей, от 600 до 1000 знаков – 1000 рублей.

Газета выходит по пятницам.
Заказ №2856
Подписные индексы газеты: в Татарстане **П2340**, в Российской Федерации **П7093**
Цена свободная.

16+